Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТЯБРЬ 17 ТУНТИКУН 240(5053) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш ҫул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаҫачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăҫ пайĕн—0—86, ялхуҫалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăҫ пайĕн—7—97, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Марксисăм-ленинисăм теорине хăйуллăнтарах вĕренсе алла илер

Партире тăракан тата партире тăман ҫĕршер пин большевиксем Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Партин историне вĕренме тытăнчĕҫ. Ленин—Сталин партин геройла историне вĕренни пирĕн кадрсене большевисăма вĕренсе алла илме пулăшать, вĕсен политикăлă сыхăлăхне ӳстерет, обшчĕствă аталанăвĕн саккунĕсене пĕлнипе, революцине тăвакан вăйсене пĕлнипе хĕҫпăшаллантарать.

ПСК(б)П историйĕ Ленин—Сталин партийĕ помещиксемпе капиталиссен влаҫне ҫĕмĕрсе антарассишĕн, хамăр ҫĕршывра классăр социалисăмлă обшчĕствă тăвассишĕн кĕрешсе туйăннă пысăк опытсене пĕтĕҫтерсе тухать. Историлĕ фактсем марксисăм-ленинисăм теорийĕ, чи малта пыракан, пурнăҫлă, ҫĕнĕ опытпа, ҫĕнĕ пĕлӳсемпе аталанса, лайăхланса, пуянланса пыракан теори, кĕрешӳпе ĕҫсен паттăр руководстви пулса тăракан теори тĕрĕс пулнине кăтартаҫҫĕ.

„Марксисла-ленинла теорин вăйĕ,—тенĕ ПСК(б)П историнче,—вăл партине лару-тăрува тĕрĕс тавҫăрса илме май парать, йĕритаврари событисен шалти ҫыхăнăвне ăнланма, событисем мĕнле пулса пырассине малтанах курса тăма, событисем халĕхи вăхăтра мĕнле тата ăҫтала аталанса пынине пĕлсе тăма ҫеҫ мар, тата вĕсем ҫитес вăхăтра мĕнле тата ăҫтала аталанса пырассине пĕлсе тăма май парать.

Марксисăм-ленинисăм теорине вĕренсе алла илнĕ парти кăна малала шанчăклăн пыма тата рабочи класа малала илсе пыма пултарать“.

Йĕртсе пыракан работникăн, вăл теорине пĕлмест пулсан, суккăр ҫын пек хыпашласа ҫӳремеле пулать, вăл хăйĕн ĕҫĕнче малашлăха, шанчăка ҫухатать, вăл хăй хыҫҫăн массăна илсе пыма пултараймасть.

Совет Союзĕ—ҫĕнĕ йышши, етем историйĕнче халиччен пулман государствă. Ҫакăн пек государствăна ăнаҫлăн тытса пырас тесен, кадрсем, теори йĕнчен таканланнă кадрсем нумай кирлĕ, хамăрăн совет интеллигенцийĕ пулмала. Епĕр тĕпрен илсен, коммунисăмăн пирвайхи, кĕҫĕн сыпăкне—социалисăмлă обшчĕствăна туса ҫитертĕмĕр, халĕ ĕнтĕ коммунисăмăн ҫӳлти сыпăкне кĕретпĕр. Пирĕн ҫĕршыв капиталисăм тĕнчи йĕри-тавра хупăрласа тăнă условисенче пурăнса аталанать: чикĕн леш йĕнче тăшмансем сахал мар, вĕсем совет влаҫне пăвса пăрахма, Совет Союзĕнче капиталисăм йĕрки туса хума тăрăшаҫҫĕ. Тĕнчери лару-тăру йăвăрланса ҫитнĕ, коммунисăм тăвас йĕнĕпе пысăк задачăсем тăнă условисенче уйрăмăнах пирĕн партин йĕртсе пыракан кашни работникĕн, кашни активлă дейатĕлĕн ответлăхĕ хăпарать. Мĕншĕн тесен, тытса пырас тени—малашлăха курса тăрас тенине пĕлтерет. Обшчĕствă аталанăвĕн саккунĕсене пĕлмесĕр малашлăха курса тăма ҫук. Ҫавăнпа та марксисăм-ленинисăм теорине вĕренсе алла илес задачă халĕхи вăхăтра уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Парти историйĕн курсĕ — пирĕн партине Сталинла Тĕп Комитет панă теорилĕ паттăр хĕҫпăшал—чăн малтан, пирĕн совет интеллигенцине, пирĕн парти, совет, кооператси, профсоюз, ҫар кадрĕсене, государствă аппаратĕнче ĕҫлекен работниксене, пирĕн социалисăмлă аслă державăра управлени ĕҫне туса пыракан пĕтĕм работниксене тивет. ПСК(б)П историйĕ аслă шкулсенче вĕренекенсене тивет, мĕншĕн тесен, вĕсем пирĕн пулас командăй кадрсем.

Марксисла-ленинла партин теорилĕ никĕсĕ диалектикăлă тата историлĕ материалисăм пулаҫҫĕ. Ҫак никĕссене вĕренсе ăнланасси пирĕн партири кашни активлă дейатĕлĕн обйазăннăҫĕ пулать.

Хăшпĕр ҫынсене марксисăм-ленинисăм теорине вĕренсе алла илесси питех те йăвăр пек, пурĕшех те вăй ҫитерме пултарайман пек туйăнать. Кун пек шутлани тĕрĕс мар вăл! Теорирен хăрама кирлĕ мар, теорине пĕлесси вăл—вĕренсе туйăнас йапала. Пирĕн ватă большевиксем, пытанса, халĕхи ăру пек мар, темĕн пек йăвăр условисенче ĕҫлеме, вĕренме тивнĕ пулсан та, теорине вĕренсе алла илме ҫеҫ мар тата вăл теорипе пролетариат ҫĕнтермеле тăвассишĕн кĕрешнĕ ҫĕрте тĕрĕс усă курма та пултарнă вĕт. Пирĕн ҫĕршывра, пирĕн саманара вĕҫĕ-хĕррисĕр, ҫине тăрса ăнаҫлăн вĕренме кирлĕ лайăх условисем пурте пур. Вĕренес текен валлĕ—пичет, кĕнекесем, марксисăм-ленинисăмăн первоисточникĕсем пур, вĕсене халиччен нихăш ҫĕршывра та пулман пысăк тиражсемпе кăлараҫҫĕ; темĕн чухлĕ библиотекăсем, лекцисем, консультацисем пулаҫҫĕ, тĕрлĕрен курссем.

ВĔРЕНМЕ ПУР УСЛОВИСЕМ ТЕ ПУР. Задачă—кĕнеке ҫинче хăв тĕллĕн ларса ĕҫлеме вĕренсе ҫитесси пулать. Ҫапла ҫав, хăв тĕллĕн! Пирĕн парти организацисем, кружоксем тăвасси хыҫҫăн кайса, совет стройĕн условийĕсенче кружоксем пропагандăн тĕп форми пулма пултарайманни тата пулмала та марри ҫинчен манса кайнă. Вĕренекенсен йышĕ хыҫҫăн хăваласа, вĕренӳ пахалăхĕ ҫинчен маннă. Ирĕксĕрлесе вĕрентнипе, вĕренекенĕн кĕнеке ҫинче хăй ларса вĕренес хастарлăхне, хăйĕн политикăлă пĕлĕвне хăпартас хастарлăхне сивĕтнĕ. Опытсăр пропагандиссем, хăйсем те ҫийелтен кăна вуласа пĕлнĕскерсем ,сайра-хутра мар занятисене типĕтсе хăварнă, унтан чĕрĕ чуна кăларса илнĕ, ыйтусене ҫивĕччĕн, вирлĕн, интереслĕн лартма пĕлмен. Пурне те обйазательнă йĕркепе кружока „саварса илес“ йĕрке вĕренекенĕн обшчĕствă аталанăвĕн саккунĕсене хăй вĕренсе пĕлме пулас, марксисăм-ленинисăм никĕсне хăй тĕллĕн вĕренсе хăй пуҫĕпе ăнланас, марксисла-ленинла теорине вĕренсе пĕлме пулас шанăҫне пĕтерсе лартнă. Лайăх пропагандиссен опычĕ хăй кружок картишĕн тулашне тухайман. Пропагандăна ҫакăн пек организацилени чи илемсĕр кустарщчинă, вăл хамăрăн кадрсене идейăпа политикă йĕнчен воспитани парас ĕҫре усă кӳме пултараймасть.

ШАПАХ ТА КĔНЕКЕ ҪИНЧЕ, УЧЕБНИК ҪИНЧЕ, МАРКСИСĂМ-ЛЕНИНИСĂМ ПЕРВОИСТОЧНИКĔСЕМ ҪИНЧЕ ЛАРСА ХАРПАРХĂЙ ТĔЛЛĔН ĔҪЛЕССИ ҪИНЕ ПУСĂРĂНМАЛА ТА ĔНТĔ. ПСК(б)П истори курсĕ ҫакăн пек тĕп кĕнекесенчен пĕри пулать те. Марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илсе, Маркс—Енгĕлс—Ленин—Сталин произведенисене вуламала. Кашни совет интеллигенчĕ хăй умне Марксăн тĕп кĕнекине—„Капитала“ вуласа тухса вĕренес задачăна лартма пултарать, лартмала та. Ҫак задачăра тума пултарайманни, вăй ҫитермеле марри нимĕн те ҫук.

Теорине ҫийелтен вуласа илнипе вĕренсе алла илме ҫук. Теорине тарăннăн вĕренсе алла илес тени вăл—вуласа тухнă йапалана вĕҫне ҫитиччен ăнланассине, ăна тĕплĕн шухăшласа ,туйса илессине пĕлтерет. „Прорабатывать“ тумала мар (ҫак питех те сарăлнă термин вăл ҫийелтен пăхнине, васканине, ҫийелтен шăйăрттарса кайнине, ыйтăвăн тĕп шухăшне ăнланманнине пĕлтерет), вуламала, вуласа тухнине тĕплĕн шухăшласа илмеле—ҫакăн пек тăрать задачă. Кашни совет интеллигенчĕн тăтăшах вуласа тăрас хăнăху илни кирлĕ; вуласа тăрас хăнăху ӳтпе йуна кĕрсе вырнаҫмала, кулленхи йăла пулса тăмала, пĕр кун, икĕ кун вуламан хыҫҫăн пайан вăл темĕн пысăк, питĕ кирлĕ ĕҫе сиктерсе хăварнăн туйăнакан пултăр.

Вăхăта тĕрĕс организацилес пулать, кĕнеке ҫинче лармa кашни кун валлĕн вăхăт уйăрса хума пĕлмеле. Пирĕн хаклă вăхăт ытла та нумай усăсăр иртет. Епĕр минутсене хаклама вĕренсе ҫитеймен-ха, минутсене ҫеҫ мар, сехетсене те. Вăхăта усăсăр иртерни, ĕҫе организацилеме пĕлменни, тĕллĕн ĕҫлеме пĕлменни — ҫакă вăл йнкек, ăна хирĕҫ хайар кĕрешӳ пуҫарса йамала.

Хăй тĕллĕн ĕҫлеме, марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илме кашни совет интеллигенчĕ вăй ҫитерме пултарать. Кадрсем марксисăм - ленинисăм теорине вĕренсе алла илнипе коммунисăм ĕҫĕшĕн калама ҫук пысăк ҫитĕнӳ туни куҫ умĕнчех.

Сталин йулташ ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1937 ҫулти февраль-мартри пленумĕнче каланă:

„Пирĕн парти кадрĕсене, айалтан пуҫласа ҫӳле ҫитичченех, вĕсене государствăн шалти тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăва ҫăмăллăнах чухлама пултарас таран идеологи тĕлĕшĕнчен хатĕрлеме тата политикă тĕлĕшĕнчен пиҫĕхтерме пултарсан, вĕсене пысăк йăнăшсем тумасăр ҫĕршыва йĕртсе пыма пултаракан пиҫсе ҫитнĕ ленинĕҫсем, марксиссем тума пултарсан, ҫакна тума пĕлсен, вара епĕр пирĕн мĕнпур задачăсен вунă пайĕнчен тăхăршне татса панă пулаттăмăр, тесе шухăшлатăп епĕ“.

ПСК(б)П историйĕн курсĕ пирĕн кадрсене теорилĕ паттăр хĕҫпăшал парать. Ҫак хĕҫпăшалпа усă курма вĕренсе ҫитер, унпа пĕлсе, ĕҫлĕхлĕ усă курма, коммунисăм ҫитĕнĕвĕсене темиҫе хут нумай ӳстерме вĕренсе ҫитер.

(„Правда“ умстатйи, 1938 ҫ октăберĕн 15-).

Хăйулă лётчицăсем Хабарăвска кайма тухнă

Октăберĕн 15-мĕшĕнче Комсомольскри ĕҫҫыннисем „Родина“ самолёт екипажне чаплăн ăсатса йанă.

Парахут тапранса кайиччен пĕр сехет маларах нумай ҫынлă митинг пулса иртнĕ.

Митингра Осипенко йулташ сăмах тухса каланă. Вăл хăйсене хаваслăн та ăшшăн кĕтсе илнĕшĕн Комсомольскри ĕҫҫыннисене „Родина“ самолётăн пĕтĕм екипажĕ йачĕпе тата тепĕр хут тав тунă, тата парти ирĕкĕпе, Сталин йулташ ҫывăхăн пулăшнипе тунă чаплă хула хăйне чунтан савăнтарнине каласа панă. Вăл Мускаври ĕҫҫыннисене тата Сталин йулташа Комсомольскри ĕҫҫыннисенчен салам калама сăмах панă.

Иулашкинчен Осипенко йулташ Комсомольскри ĕҫҫыннисене тата лайăхрах ĕҫлеме, ҫĕршыв оборонине тĕреклетме, тăшмансен йулашкисене тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа ыватма чĕннĕ.

Митинг хăватлă та мухтавлă „Интернационал“ йуррипе хупăннă.

Комсомольскри ĕҫҫыннисем хăйулă та паттăр героинăсене дебаркадĕр патне ҫитийех ăсатса йанă. Саламлă сăмахсем каласа, ăнаҫлă ҫул сунса кăшкăрнисем нумайччен йанраса тăнă.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Октăберĕн 14-мĕшĕнче пăлхавҫăсен ҫарĕсем авиаци тата артиллери пулăшнипе Кольде Косо районĕнчи (хĕвелтухăҫ фронтĕнче) высотасенчен пĕрин ҫине атакă тунă. Высота икĕ хутчен пĕр аларан тепĕр алла куҫнă, йулашкинчен ăна пăлхавҫăсем туртса илнĕ. Анчах республиканĕцсем ăна каллех атакăласа, ҫапăҫса туртса илнĕ, нумай ҫынна тыткăна илнĕ, вăрҫă хатĕрĕсем туртса илнĕ. Сывлăшри ҫапăҫу вăхăтĕнче фашиссен 3 самолётне персе антарнă.

Октăберĕн 13-мĕшĕнче Мадрид ҫине артиллерирен хăйаррăн персе тăнă. Шултăра калибрлă снарйадсем, пурĕ 500 йахăн, хулан центрти, халăх нумайрах пурăнакан квартăлĕсем ҫине пырса ӳкнĕ.

Октăберĕн 14-мĕшĕнче Италин 6 самолёчĕ Фигарес хули ҫине (Испанин ҫурҫĕр-хĕвелтухăҫ пайĕнче, Херона провинцинче) тата ун ҫывăхĕнчи йалсем ҫине бомбăсем пырса пăрахнă. 13 ҫурт ишĕлнĕ. 10 ҫын вилнĕ тата 50 ҫын аманнă, вĕсенчен нумайĕшĕ хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасем.

(ТАСС).

Китайри вăрҫă

Центрти Китайра, Бейпин—Ханькоу чукунҫулĕ ҫинчи Синьйан районĕнче, Китай ҫарĕсем йапонĕцсене Льулин станцинчен (Синьйанран кăнтăр йеннерехре) хĕссе кăларса, ҫурҫĕр йеннеле наступлени туса пыма пуҫланă. Синьйан йĕри-тавра хайар ҫапăҫусем пыраҫҫĕ.

Жуйчан—Сингочжоу шоҫҫе ҫулĕ ҫинче (Йанцзы шывĕн кăнтăр йенчи ҫыранĕ ҫинче, 4 кун хушши хайаррăн ҫапăҫнă хыҫҫăн, йапонĕцсен пин ҫынна йахăн вилсе пĕтнĕ. Вăл районра хайар ҫапăҫусем пыраҫҫĕ.

Октăберĕн 13-мĕшĕнче Йанцзы йуханшывĕ ҫинче Китайăн ҫыранри артиллерийĕ Йапонин пĕр канонеркине шыва путарнă тата теприне стройран кăларнă.

Кăнтăр Китайра Вейчжоу районĕнче Китай ҫарĕсем йапонĕцсене хирĕҫ вăйлăн ҫапăҫаҫҫĕ. Йапонĕцсене пысăк сийен кӳреҫҫĕ. Тамшуйпа Пиншань районĕнчи (Вейчжоуран кăнтăр-хĕвеланăҫ тата кăнтăр-хĕвелтухăҫ йенче) ҫапăҫусенче йапонĕцсем 6 пин ҫын вилнĕ. Ҫапăҫу пыракан вырăна Китай ҫарĕсене тĕреклетме ҫĕнĕ вăйсем пыраҫҫĕ.

(ТАСС).

Ăмăртăва хутшăннă

ШĂХАСАН. Районри пур йалсоветсемпе колхозсем те Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă. Вĕсем аслă уйава пысăк ҫитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеҫҫĕ. Акă, Ухман йалсовечĕ уйава тăваттăмĕш квартăл финанс планне 75 % тултарассишĕн, 1938-мĕш ҫулшăн ашкакай парса татса, 1939 ҫулшăн 45 процент таран парассишĕн кĕрешет. Ку тĕлĕшпе Ухман йалсовечĕ Атнаш йалсовечĕпе ăмăртать.

Халь йалсоветсенче тата колхозсенче обйазательствăсене мĕнле пурнăҫа кĕртсе пынине тĕрĕслеҫҫĕ. Ухман йалсоветне кĕрекен „Олешовă“, „Иамурза“ колхозсем государствă умĕнчи парăмсене пĕтĕмпех парса татнă. Ҫак колхозсенчи колхозниксем ҫĕнĕ займшăн укҫине тӳлесе татнă. Икĕ колхозĕ те кĕрхи ҫĕртме сухи планĕсене тултарнă.

Ив. Федотăв.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Октăберĕн 15-мĕшĕнче Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хăйĕн ларăвĕнче ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫумĕнчи Госплан тăратнă халăх хуҫалăхĕн IV-мĕш квартăлти планне ҫирĕплетрĕ. Вăл план тăрăх РСФСР тата Чăваш АСС Республикне пăхăнса тăракан государствă промышленнăҫĕн IV-мĕш квартăлта 7.490,2 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлармала. Ку шутра районсенчи промышленнăҫĕн 317,5 пин тенкĕлĕх шутланать. Промысла кооперации союзĕсен 15100 пин тенкĕлĕх, вăл шутран: кулленх кирлĕ таварсем—8158,0 пин тенкĕлĕх кăлармала.

РСФСР тата ЧАССР пăхăнса тăракан государствă промышленнăҫĕн IV-мĕш квартăлти планĕ III-мĕш квартăлтипе танлаштарсан 21,5 процент ытла тата хăшпĕр отрăҫлĕсем йĕнĕпе ҫулталăкри плантан 30 процент ытларах шутланать.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвĕнче халăх комиссариачĕсен, трестсен, уйрăм предприйатисен тата райĕҫтăвкомсен представителĕсем пулчĕҫ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ халăх комиссариачĕсене, промысла кооперации союзĕсене, райĕҫтăвкомсене, хула совечĕсене ПСК(б)П Чăваш организацин XIX-мĕш конференци решенийĕсене пурнăҫа кĕртсе, йышăннă плана пур предприйатисем тăрăх та тултармала тума хушрĕ. Каҫалхи ҫулăн нойабĕр уйăхĕ пуҫламĕшĕнче Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвĕнче Вырăнти промышленнăҫ Халăх Комиссариачĕн, Промсоюзăн, Коопинсоюзăн, тир-сăран савăчĕн тата Канашпа Йĕтĕрне райĕҫтăвком председателĕсенне IV-мĕш квартăлти плана тултарма предприйатисен ĕҫĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе мĕнле ĕҫсем туса иртерни ҫинчен докладсем итлеме йышăнчĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Халăх Комиссариачĕсен, промысла кооперации союзĕсен руководителĕсене, предприйати директăрĕсене IV-мĕш квартăл планне тултармали мелсене союзсен, предприйатисен активĕн канашлăвĕнче сӳтсе-йавса, халăх хуҫалăхĕн IV-мĕш квартăл планне ытлашшипех тултармала тума хушрĕ. Тата ҫакна асăрхаттарчĕ: йышăннă план предприйатисемшĕн пĕчĕк программă ҫеҫ пулать, ҫавăнпа та хăшпĕр йĕнĕпе IV-мĕш квартăл заданине ӳстерме ыйту лартма йышăнчĕ.

Венгри ҫарĕсем Чехословаки чиккинче провокацилĕ ĕҫсем тăваҫҫĕ

Венгрипе Чехословаки хушшинче лару-тăру ҫак йулашки икĕ кун хушшинче пит те ҫивĕчленсе кайнă. Венгри Чехословакипе калаҫма пăрахнă. Мĕншĕн тесен Чехословаки делегацийĕ Венгрин сĕмсĕр требованийĕсене йышăнман. Вăл требованисенче Венгри венгер халăхĕ пурăнакан районсемсĕр пуҫне, 430 пин словаксем тата 80 пин украинĕцсем пурăнакан районсене хăй аллине пама ыйтнă пулнă.

Венгрире пур ҫĕрте те, уйрăмах чикĕ хĕрринчи районсенче, Чехословакине хирĕҫле демонстрацисем пулса иртеҫҫĕ. Венгри правителстви Чехословакине „хĕсме“ шухăшланă. Чехословаки ҫывăхĕнчи чикĕсем патне ҫар чаҫĕсем йама тытăннă.

Йулашки икĕ кун хушшинче Чехословакипе Венгри чиккисем патĕнче чылай хĕҫпăшаллă ҫапăҫусем пулса иртнĕ. Октăберĕн 14-мĕшĕнче Венгри ҫарĕн 300 ҫынтан тăракан отрйачĕ чикĕ урлă каҫса Чехословакин чылай пункчĕсене йышăннă. Чехословаки ҫарĕсем хĕҫпăшалсемпе хирĕҫ тăнă. Пăшалсенчен персе тăнă хыҫҫăн икĕ йенче те вилнисем тата аманнисем пулнă. Венгри чаҫĕсене Чехословаки территорийĕ ҫинчен хăваласа кăларнă. Словакипе Закарпат Украинин автономлă правителствисем Венгри чаҫĕсем чикĕ ҫывăхĕнче хатĕрленĕ пăлхавсене пĕтерсе лартас йĕнĕпе чылай ĕҫсем туса иртернĕ. 200 ҫынна йахăн арĕсленĕ.

Чикĕ хĕрринчи лару-тăру ҫав тери йăвăрланса ҫитнĕ. Октăберĕн 14—15-мĕшĕсенче каллех ҫапăҫусем пулса иртнĕ. Чехословаки ҫарĕн чаҫĕсем Венгри ҫарĕсем чикĕсене пăсма хăтланнине пĕтĕмпех пĕтерсе хунă. Венгри чикки патне ҫĕнĕрен ҫар чаҫĕсем йараҫҫĕ.

(ТАСС).

Комсомол хуҫалăхĕнче ҫирĕп йĕрке пулмала

Хĕрлĕ Чутай районĕнче комсомол хуҫалăхĕнче йĕрке кӳрессине кирлĕ пек хакламаҫҫĕ. Районран урăх ҫĕре вĕренме йе ĕҫлеме кайнă комсомолĕцсене учотран кăларас ĕҫе йĕркелемен. Комсомол райкомĕ районра миҫе комсомолĕцне те тĕплĕн пĕлмест.

Комсомол пуҫламĕш организацисем хăйсен ĕҫĕсене шанчăклă вырăнта усрамаҫҫĕ. Турисĕрпӳкассинчи комсорг Скворцов комсомол организацин ĕҫĕсене вулав ҫурчĕн шкапĕнче кирлĕ мар хутсемпе хутăш пăтраштарса усрать. Туканашри комсорг Кудрейĕв, Хурашашри комсорг Пойазыкăв протоколсене хăйсен килĕсенче усраҫҫĕ.

П. Макарăв.

ОКТĂБĔР УЙАВĔ УМĔНХИ ĂМĂРТУ

Тунă ҫитĕнӳсене ҫирĕплетеҫҫĕ

Шупашкарти строителствăра рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксем хушшинче Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту сарăлса пынă май, стахановĕцсен хисепĕ ӳсех пырать. Ҫĕнĕрен пынă рабочисем часах ĕҫлеме хăнăхса ҫитеҫҫĕ. Ҫĕр чавнă ҫĕрте ĕҫлекен Меткошкин йулташ бригади октăбĕр уйăхĕн малтанхи 10 кунĕнче плана 216,5 процент тултарнă. Бригада членĕсем (4 ҫын) пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕҫлеҫҫĕ, нормăна тултарманнисем ҫук. 4 ҫынтан тăракан хĕрарăмсен бригади те (бригадирĕ Коракова йулташ) тĕрлĕрен ĕҫсенче ĕҫлесе вунă кунхи нормăна 107 процент тултарнă.

Октăберĕн малтанхи кунĕсенче тунă ҫитĕнӳсене ҫирĕплетсе, бригадăсем халĕ татах та лайăхрах тĕслĕхсем кăтартса ĕҫлеме пуҫларĕҫ. Акă, Коракова йулташ бригади ҫак кунсенче нормăна 120 процент, Николайĕв йулташ бригади 113—130 процент тултарса ĕҫлеҫҫĕ.

Платниксен бригадисем те лайăх примерсем кăтартаҫҫĕ. Йашманăв йулташ йĕртсе пыракан бригадă сентăберĕн 26-мĕшпе октăберĕн 10-мĕш хушшинче кашни кунах плана 160—195 процент тултарса пынă. Халĕ бригадă членĕсем 200 процентран кайа мар тултарассишĕн кĕрешеҫҫĕ.

В. Дмитрийĕв.

ӲКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: Оля Бойцова—Ленинградри „Пролетарская победа №2“ йатлă атă-пушмак хапрăкĕнчи комсомолкă-стахановкă, нормăна 150 процент тултарать.

(„Прессклише“).

Трактăриссен ăмăртăвĕ

ЙĔЛЧĔК. Комсомол райкомĕн членĕ Йевгенийă Золотникова виҫĕмĕш ҫул ĕнтĕ трактăристкă пулса ĕҫлет. Вăл кашни ҫулах МТС-ра малти вырăнта пырать.

Комсомол 20 ҫул тултарнă йатпа пыракан ăмăртăва хутшăнса, Золотникова йулташ П. Петранкин трактăристпа социалисăмлă ăмăртăва тухрĕ. Пайанхи куна вăл 538 гектар сухаланă, 750 килограм горючи перекетленĕ. Ҫулталăк планне 185 процент тултарса, 652 ĕҫкунĕ тунă. Унпа ăмăртса ĕҫлекен Петранкинăн 577 ĕҫкунĕ.

К. ВОРОБЙОВ.

Икшер нормă

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнчи рабочисем Октăбĕр уйавне хатĕрленсе, ҫĕнĕ ӳсĕмсем тăваҫҫĕ. Акă, раскройнăй цехра ĕҫлекен Ирина Каракулăва йулташ октăберĕн 14-мĕшĕнче нормăна 208,5 процент, унпа ăмăртса ĕҫлекен Нина Уварăва йулташ—165 процент тултарнă. Федотăвпа ăмăртакан Мефодий Клементйĕв та ҫак кун плана 202,8 процент тултарнă.

И. Федăрăв.

9 йалта електричĕствă ҫути пулмала

ТРАК. Ĕлĕк, революци пуличчен Именкасси йалĕ патĕнче пулнă Ластуха кулакăн шыварманĕ вырăнĕнче, халĕ гидроелектростанци тăваҫҫĕ. Станцăна тунă ҫĕрте пĕтĕмпех вырăнти колхозниксемпе колхозницăсем, ĕҫҫыннисем ĕҫлеҫҫĕ. Халĕхи вăхăтра чылай обйектсем тăрăх ĕҫе туса пĕтернĕ те ĕнтĕ, строителствă кунран кунах вĕҫленсе пырать.

Стахановĕцсемпе ударниксем Октăбĕр уйавне хатĕрленнĕ май, хăвăртлăхсене татах та ӳстерчĕҫ. Платниксем Г. Ваҫилйĕв, И. Павлăв, Ф. Владимирăв, М. Ҫеменăв йулташсем кулленхи ĕҫ нормисене 200 процент тултарса ĕҫлеҫҫĕ. П. Петрова, Х. Йегорăва йулташсем те нормăсене ытлашшипех тултарса пыраҫҫĕ.

Станцăна Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă революци 21 ҫул тултаракан уйав тĕлне туса пĕтерсе, таврари 9 йала електричĕствă ҫути памала. Анчах ĕҫре пĕр чăрмав пур—строителствăра ĕҫ вăйĕ ҫителĕксĕр. Кунтă кашни кун 300 ҫын ĕҫлемеле пулсан, халĕхи вăхăтра ҫав шутран ҫуррине йахăн ҫеҫ ĕҫлеҫҫĕ. Ĕҫ вăйĕ парассине уйрăмăнах Комбайн“, „Победа“, „Пятилетка“, „Новая деревня“, Молатăв йачĕпе тăракан колхозсем кайра пыраҫҫĕ.

Гидроелектростанцине туса пĕтерсе експлоатацине йарасси вăл кашни колхозникшĕн, ĕҫҫыннишĕн савăнăҫлă ĕҫ пулмала.

Ваҫ. Иваншков.

Францири фашисла заговорщиксем

Францири компарти хаҫачĕ „Юманите“ Францири фашисла заговорщиксен ĕҫĕсене тăрă шыв ҫине кăларакан статйа пичетленĕ. Францири халĕхи вăхăтри фашисла лигăсем, тесе ҫырать хаҫат, каллех 1934 ҫулти февральри йĕвĕрлĕ ĕҫне путч тума хатĕрленеҫҫĕ. Вĕсем ҫекретлă ҫĕнĕ организацисем тунă, фашисăма хирĕҫле партисемпе организацисен дейатĕлĕсен шутĕнчен вăрламалли ҫынсен списокĕсене те туса хунă.

(ТАСС).

Пӗтӗм Сойузри Коммуниссен (бођшевиксен) Партин
ИСТОРИЙӖ

ПСК(б)П Тӗпкомӗн Комиҫҫийӗ редакцилленӗ. — КӖСКЕ КУРС. ПСК(б)П Тӗпкомӗ ырланӑ. 1938 ҫ.

III-мӗш сыпӑкӑн малали

3. Бођшевиксемпе међшевиксем хушшинчи тактикӑлла разноглаҫисем. Партин III-мӗш сйесӗ. Ленинӑн „Две тактики социал-демократии в демократической революции“ ятлӑ кӗнеки. Марксисла партин тактикӑлла никӗсӗсем.

Револђуци обществӑн пур классӗсене те хускатса янӑ. Револђуцине пула ҫӗршывӑн политикӑлла пурнӑҫӗнче пулнӑ улшӑну вӗсене пусарӑнса ларнӑ кивӗ позицисенчен тапратса янӑ, вӗсене ҫӗнӗ обстановкӑна май ушкӑнланса тӑма хистенӗ. Кашни клас, кашни парти хӑйӗн тактикине тума тӑрӑшнӑ, хӑйне хӑй тыткаламалли ҫулйӗре, хӑй ытти классемпе мӗнле ҫыхӑнса тӑмалине, правительства ҫине мӗнле пӑхмалине палӑртса хума тӑрӑшнӑ. Патша правительствин те, уншӑн йӑланхи пек мар, хӑйӗн ҫӗнӗ тактикине тума тивнӗ, „представительнӑй учреждение“,— Булыгин думине пухма сӑмах памала пулнӑ.

Социал-демократла партин те хӑйӗн тактикине туса хатӗрлемеле пулнӑ. Ҫакна тума револђуцин ӳсе хӑпаракан ҫекленӗвӗ хушнӑ. Ҫакна тума пролетариат умне тухса тӑнӑ, вӑраха яма ҫук практикӑлла ыйтусем хушнӑ, вӑл ыйтусем: хӗҫпӑшаллӑ восстани организацилесси ҫинчен, патша правительствине сирпӗтсе антарасси ҫинчен, вӑхӑтлӑх револђуцилле правительства тӑвасси ҫинчен, социал-демократи ҫав правительствӑна хутшӑнасси ҫинчен, хресченсем ҫине мӗнле пӑхасси ҫинчен, либераđнӑй буржуази ҫине мӗнле пӑхасси ҫинчен тата ытти ҫинчен пулнӑ. Социал-демократин тӗплӗ шухӑшласа тунӑ марксисла, пӗрлӗхлӗ тактикине туса хатӗрлемеле пулнӑ.

Анчах међшевиксен оппортунисӑмӗпе расколђникла ӗҫӗсене пула, вӑл вӑхӑтра Российӑри социал-демократи икӗ фракцине уйӑрӑлса тӑнӑ пулнӑ. Раскол пӗтӗмпех пулса ҫитнӗ тесе шутлама пулман, тата ҫак икӗ фракци формаđнӑ икӗ расна парти пулса тӑман-ха, анчах ӗҫре вӗсем икӗ расна парти пекех курӑннӑ, вӗсен хӑйсен центрсем, хӑйсен хаҫачӗсем пулнӑ.

Међшевиксем пирӗн партин ытларах пайӗпе организацилле ыйтусем тӗлӗшпе пулнӑ хӑйсен кивӗ разноглаҫисем ҫумне ҫӗнӗ разноглаҫисем, тактикӑлла ыйтусем тӗлӗшӗнчи разноглаҫисене хушнӑ. Ҫак обстойательства вара раскола тата тарӑнлатса яма пулӑшнӑ.

Пӗрлӗхлӗ парти ҫукки пӗрлӗхлӗ партилле тактика ҫукки патне илсе пынӑ.

Партин черетлӗ III-мӗш сйесне вӑраха ямасӑрах пухса, сйесра пӗрлӗхлӗ тактика туса, сахалтарахӑшне сйесӑн решенийӗсене пурнӑҫа тӳррӗн кӗртме хушнӑ пулсан, сйесӑн ытларахӑшӗ йышӑннӑ решенисене пӑхӑнса тӑмала тунӑ пулсан, лару-тӑруран тухмали майсене тупма пулнӑ пулӗччӗ. Боđшевиксем међшевиксене шӑпах ҫак майсене сӗннӗ те ӗнтӗ. Анчах међшевиксем III-мӗш сйес ҫинчен итлесшӗн те пулман. Партине малала та парти ырланӑ тата партин пур членӗсемшӗн те обязательнӑ пулса тӑракан тактикӑсӑр тӑратса хӑварнине преступлени вырӑнне шутласа, боđшевиксем III-мӗш сйеса пухас пуҫарулӑха хӑйсем ҫине илме йышӑннӑ.

Сйеса партин пур организацийӗсене те, боđшевикла организацисене те, ҫавӑн пекех међшевикла организацисене те чӗннӗ пулнӑ. Анчах међшевиксем III-мӗш сйеса хутшӑнассине йышӑнман, вӗсем хӑйсен сйесне пухма йышӑннӑ. Вӗсем хӑйсен сйесне конференци тесе ят панӑ, мӗншӗн тесен вӗсен делегатсем сахал пулнӑ, анчах чӑннипе вӑл—сйес, међшевиксен партийӗн сйесӗ пулнӑ, вӑл сйесӑн решенийӗсем пур међшевиксемшӗн те обязательнӑ пулнӑ.

1905 ҫулти апређре, Лондӑнра, Российӑри социал-демократла партин III-мӗш сйесне пухнӑ. Сйеса 20 боđшевикла комитетсенчен 24 делегат пынӑ. Сйесра партин пур пысӑк организацийӗсен представителӗсем те пулнӑ.

Сйес међшевиксене „партин уйӑрӑлса кайнӑ пайӗ“ вырӑнне хурса сивленӗ, унтан партин тактикине тӑвас пирки черетлӗ ыйтусем ҫине куҫнӑ.

Сйеспа пӗр вӑхӑтрах Женевӑра међшевиксен конференцийӗ пухӑннӑ.

„Икӗ сйес—икӗ парти“, — ҫавӑн пек палӑртса панӑ лару-тӑрӑва Ленин.

Сйес та, конференци те тӗрӗссипе тактикӑлла пӗр ыйтусенех сӳтсе-явнӑ, анчах ҫак ыйтусем тӑрӑх пачах хире-хирӗҫле решенисем йышӑннӑ. Сйесра тата конференцире йышӑннӑ икӗ тӗрлӗ револђуци партин III-мӗш сйесӗпе међшевиксен конференцийӗ хушшинчи, боđшевиксемпе међшевиксен хушшинчи тактикӑлла разноглаҫисен пӗтӗм тарӑнлӑхне кӑтартса панӑ.

Ака вӑл разноглаҫисен тӗп пункчӗсем.

Партин III-мӗш сйесӗн тактикӑлла ҫулйӗрӗ. Сйес ҫапла шутланӑ: пулса пыракан револђуци буржуалла-демократилле револђуци пулин те, халђхи вӑхӑтра вӑл капитализӑм чухне пулма пултармалли рамкӑран тухма пултараймасť пулин те, вӑл пӗтӗмпех ҫӗнтерессишӗн пуринчен малтан пролетариат интересленет, мӗншӗн тесен ҫав револђуцин ҫӗнтерӗвӗ пролетариата организациленме, политикӑлла ҫекленме, ӗҫҫынниссен массисене политикӑлла йӗртсе пырас опытпа хӑнӑху илме, буржуалла револђуцирен социализмла револђуци патне куҫма май пана пулӗччӗ.

Буржуалла-демократилле револђуци пӗтӗмпех ҫӗнтерессине шута илсе тунӑ пролетариатӑн тактикине хресченсем ҫеҫ пулӑшса тӑма пултарассӗ, мӗншӗн тесен хресченсем револђуци пӗтӗмпех ҫӗнтермесӗр помещиксене пӗтерсе хума тата помещиксен ҫӗрӗсене илме пултараймассӗ. Ҫавӑнпа та хресченсем пролетариатӑн естественнӑй союзникӗ пулса тӑрассӗ.

Либераđнӑй буржуази ҫав револђуци пӗтӗмпех ҫӗнтерессишӗн интересленмест, мӗншӗн тесен, рабочисемпе хресченсене хирӗҫ кӗрешме патша влаҫӗ ӑна чӑпӑркка пекех кирлӗ, вӑл рабочисемпе хресченсенчен пуринчен те ытларах хӑраť, ҫавӑн пирки вӑл патша влаҫӗн правине кӑшт пӳлсе, ӑна упраса хӑварма тӑрӑшаť. Ҫавӑнпа та либераđнӑй буржуази конституцилле монархи никӗсӗ ҫинче патшапа килӗшӳ туса ӗҫе пӗтерсе лартма тӑрӑшаť.

Револђуци, ӑна пролетариат йӗртсе пырсан ҫеҫ, револђуцин ҫулпуҫӗ пулса тӑракан пролетариат хресченсемпе союз тума пултарсан ҫеҫ, либераđнӑй буржуазине пӗр пӗччен тӑратса хӑварсан ҫеҫ, социал-демократи патша йӗркине хирӗҫ халӑх восстанине хатӗрлес ӗҫе активлӑн хутшӑнса ӗҫлесен ҫеҫ, ҫӗнтерӳлӗ восстанине пула пулнӑ револђуцилле вӑхӑтлӑх правительствӑна—контрреволђуцин тымарӗсене кӑкласа ывӑтма тата пӗтӗм халӑхӑн Учредительнӑй собранине пухма пултаракан револђуцилле вӑхӑтлӑх правительствӑна туса хурсан ҫеҫ, револђуцине вӗҫне ҫитиччен илсе пырас тесе, социал-демократи тивӗҫлӗ условисенче револђуцилле вӑхӑтлӑх правительствӑна хутшӑнассине пӑрахӑҫ тумасан ҫеҫ, ҫӗнтерме пултараť.

Међшевиксен конференцийӗн тактикӑлла ҫулйӗрӗ. Револђуци буржуалла пулнӑ пирки, револђуцин ҫулпуҫӗ те либераđнӑй буржуази анчах пулма пултараť. Пролетариатӑн хресченсемпе мар, либераđнӑй буржуазипе ҫыхӑрмала. Тӗп ыйту кунта—хамӑр револђуцилле пулнипе либераđнӑй буржуазине хӑратса ямала мар тата ӑна револђуцирен пӑрӑнса кайма сӑлтав памала мар, мӗншӗн тесен вӑл револђуцирен пӑрӑнса кайсан, револђуци вайсӑрланаť.

Тен, восстани ҫӗнтерӗ, анчах социал-демократин, восстани ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн, либераđнӑй буржуазине хӑратса ярас мар тесе, айаккала пӑрӑнса тӑмала. Тен, восстанине пула, револђуцилле вӑхӑтлӑх правительства туса хурӗҫ, анчах социал-демократин унта нимӗнле те хутшӑнмала мар, мӗншӗн тесен вӑл правительства хӑйӗн характерӗпе социализмла правительства пулмасť, пуринчен ытла—унта хутшӑннипе тата хӑй револђуцилле пулнипе социал-демократи либераđнӑй буржуазине хӑратса яма тата ҫапла майпа револђуцине ишӗлтерме пултараť.

Револђуцин малашлӑхӗ йӗнчен пӑхсан, Земский собор йе Государства думи йӗвӗрлӗ мӗнле те пулин представительнӑй учреждени, пухсан аван пулнӑ пулӗччӗ; ӑна учредительнӑй собрани пулса тӑма йе ӑна учредительнӑй собрани пухмашкӑн тӗртме тулашӗнчен рабочи клас хӗсни йурӑнӑ пулӗччӗ.

Пролетариатӑн хӑйне уйрӑм, рабочи интересӗсем пур, ҫавӑнпа унӑн шӑпах ҫак интересене пурнӑҫа кӗртме тӑрӑшмала, буржуалла револђуцин ҫулпуҫӗ пулса тӑма хӑтланмала мар; буржуалла револђуци вӑл пӗтӗмӗшлӗ политикӑлла револђуци, апла пулсан, вӑл пролетариата анчах мар, пур классене те пырса тивет.

Ҫавӑн пек пулнӑ ӗнтӗ, кӗскен, Российӑри социал-демократла рабочи партин икӗ фракцин икӗ тактики.

Ленин хӑйӗн „Две тактики социал-демократии в демократической революции“ ятлӑ историлле кӗнекинче међшевиксен тактикине классикла критикленӗ тата боđшевиксен тактикине генилле сӑлтавласа панӑ.

Вӑл кӗнекене 1905 ҫулти июђте, урӑхла каласан, партин III-мӗш сйесӗ хыҫҫӑн икӗ уйӑх иртсен ҫутта кӑларнӑ. Кӗнеке ятне пӑхсан, вӑл кӗнекере Ленин буржуалла-демократилле револђуци тапхӑрӗнчи тактикӑлла ыйтусем ҫинчен ҫеҫ ҫыраť тата вырӑс међшевикӗсене ҫеҫ асра тытаť, темеле пек. Анчах тӗрӗссипе, међшевиксен тактикине критиклесе, вӑл ҫавӑнпа пӗрлех пӗтӗм тӗнчери оппортунисӑмӑн тактикине тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ, марксиссен буржуалла револђуци тапхӑрӗнчи тактикине сӑлтавласа тата буржуалла револђуципе социализмла револђуци хушшинчи уйрӑмлӑха кӑтартса парса,—вӑл ҫавӑнпа пӗрлех марксиссен буржуалла револђуцирен социализмла револђуци патне куҫнӑ тапхӑрти тактикин никӗсӗсене формӑласа панӑ.

Ака Ленин хӑйӗн „Две тактики социал-демократии в демократической революции“ ятлӑ брошюринче тарӑнӑн ҫутатса панӑ тактикӑлла тӗп положенисем.

1) Ленин кӗнекинче витӗрех палӑрса тӑракан тӗп тактикӑлла положени вӑл—пролетариат буржуалла-демократилле револђуцин **ҫулпуҫӗ**, Российӑри буржуалла-демократилле револђуцин **руководителӗ** пулма пултараť те, пулма тивӗҫлӗ те, тенӗ идейӑ пулса тӑраť.

Ленин ҫак револђуци буржуалла характерлӑ пулнине йышӑннӑ, мӗншӗн тесен вӑл револђуци, Ленин каланӑ тӑрӑх, „демократилле переворот рамкинчен кӑна та тӳрремӗнех тухма пултарайман“. Анчах Ленин ҫапла шутланӑ: ҫак револђуци ҫӳлти сийсен револђуцийӗ мар, вӑл халӑх револђуцийӗ, пӗтӗм халӑха, пӗтӗм рабочи класа, пӗтӗм хресченсене хускатса яракан револђуци пулса тӑраť, тенӗ. Ҫавӑнпа та међшевиксем буржуалла револђуци пролетариатшӑн пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине чакарса лартма хӑтланни,—пролетариатӑн вӑл револђуцири роđне пӗчӗклетсе лартма тата пролетариата вӑл револђуцирен пӑрса яма хӑтланни—пролетариат интересӗсене сутни пулаť, тенӗ Ленин.

„Марксисӑм, тесе ҫырнӑ Ленин, пролетарине буржуалла револђуцирен пӑрӑнма мар, унта хутшӑнмасӑр тӑма мар, унта йӗртсе пырассине буржуазине пама мар, йӑлтах урӑхла, вӗҫне ҫитех пролетарилле демократисӑмшӑн, револђуцине вӗҫне ҫитерессишӗн чи хастарлӑн хутшӑнса ӗҫлеме чи татӑклӑн кӗрешме вӗрентет“ (Ленин, т. VIII, стр. 58).

„Пирӗн ҫакна манмала мар, ҫырнӑ малала Ленин, социализма ҫывхартма тулли политикӑлла ирӗклӗх пек, демократилле республика пек майсем халђхи вӑхӑтра урӑх ҫук, пулма та пултараймассӗ“ (ҫавӑнтах, стр. 104).

Ленин револђуци икӗ майлӑ вӗҫленме пултарассине курса тӑнӑ:

а) йе ӗҫ патша влаҫне татӑклӑнах ҫӗнтернипе, патша йӗркине сирпӗтсе антарнипе тата демократилле республика тунипе пӗтӗ;

б) йе, вӑй ҫитмесен, ӗҫ буржуазипе патша халӑх шучӗпе килӗшӳ тунипе, пӗр-пӗр татӑк-кӗсӗк конституци тунипе, пуринчен малтан—ҫавӑн пек конституцирен мӑшкӑласа карикатура тунипе пӗтӗ.

Пролетариат револђуци лайӑх вӗҫленессишӗн, урӑхла каласан, патша йӗркине татӑклӑ ҫӗнтерессишӗн интересленет. Анчах пролетариат револђуцин ҫулпуҫӗ, руководителӗ пулма пултарсан ҫеҫ револђуци ҫавӑн пек вӗҫленме пултараť.

„Револђуци мӗнле вӗҫленесси, тесе ҫырнӑ Ленин, ҫакӑнтан килет: рабочи клас буржуазин самодержави ҫине тапӑнса пынипе хӑватлӑ, анчах политика тӗлӗшпе вайсӑр пособникӗн роđне йышӑнӗ-и йе вӑл халӑх револђуцине йӗртсе пыраканӗн роđне йышӑнӗ-и“ (Ленин, т. VIII, стр. 32).

Ленин ҫапла шутланӑ: буржуазин пулӑшаканӗ пулассинчен хӑтӑлма тата буржуалла-демократилле револђуцин руководителӗ пулса тӑма пролетариатӑн пур майсем те пур. Вӑл майсем, Ленин шутланӑ тӑрӑх ҫаксем пулса тӑрассӗ.

Пӗрремӗшӗнчен, «пролетариат хӑйӗн лару-тӑруне пула чи малта тӑракан тата вӗҫне ҫитийех револђуцилле пӗртен-пӗр клас пулнипе, ҫапла пулнӑ пирки вӑл Российӑри пӗтӗм демократилле револђуцилле йухӑма йӗртсе пыма тивӗҫлӗ» (Ленин, т. VIII, стр. 75).

Иккӗмӗшӗнчен, пролетариатӑн хӑйӗн буржуазине пӑхӑнса тӑман, политикӑлла партийӗ пур, вӑл ӑна «пӗрлӗхлӗ тата хӑйне уйрӑм политикӑлла вӑй» пулса пӗтӗҫсе тӑма май параť (ҫавӑнтах, стр. 75).

Виҫҫӗмӗшӗнчен, револђуци татӑклӑ ҫӗнтерессишӗн пролетариат буржуазирен ытларах интересленсе тӑраť, ҫавӑн пирки «буржуалла револђуци хӑшпӗр йӗнчен буржуазине усӑлла пулнинчен ытларах пролетариата усӑлла» (ҫавӑнтах, стр. 57).

«Буржуазишӗн пролетариата хирӗҫ тӑма, тесе ҫырнӑ Ленин, аваллӑхӑн хӑшпӗр йулашкийӗсем ҫине таянни, сӑмахран, монархи ҫине, йӑланхи ҫар ҫине т. ыт. ҫине таянни усӑлла. Буржуазишӗн буржуалла револђуци аваллӑхӑн йулашкийӗсене ытла татӑклӑнах шӑлса пӑрахманни, вӗсенчен хӑшпӗрне хӑварни усӑлла, урӑхла каласан, ҫав револђуци ытла вӗҫне ҫитиччен ан пытӑр, вӗҫне ан ҫиттӗр, татӑкла та хайар ан пултӑр... Буржуазишӗн буржуалла демократи ҫулӗпе пырса тума кирлӗ улшӑнусем йӗрипентерех, майпентерех, асӑрханарах, хӑйусӑртарах, револђуцилле ҫулпа мар, реформӑсен ҫулӗпе пулса пыни усӑларах... ҫак улшӑнусем ахаљ халӑхӑн, урӑхла каласан, хресченсен тата уйрӑмӑнах рабочисен револђуцилле пултарулӑхне, пуҫарулӑхне, вӑйне йӗпле те пулсан сахалтарах ӳстерччӗр, мӗншӗн тесен унсӑрӑн рабочисене, французсем каласшле, «пӑшала пӗр хулпуҫҫи ҫинчен тепӗр хулпуҫҫи ҫине илсе хума“, урӑхла каласан, буржуалла револђуци вӗсене паракан хӗҫпӑшала, вӑл паракан ирӗклӗхе, крепостничествӑран тасалнӑ ҫӗр ҫинче ҫуралса тухакан демократилле учрежденисене буржуазине хӑйне хирӗҫ тӑратма ҫӑмӑл пулаť. Йӑлтах урӑхла, рабочи класшӑн буржуалла демократи ҫулӗпе пырса тума кирлӗ улшӑнусем реформӑтӑрла ҫулпа мар, револђуцилле ҫулпа пулса иртни усӑларах, мӗншӗн тесен реформӑтӑрла ҫул вӑл—вӑраха йӑракан чӑрмавсен, халӑх организмӗн ҫӗрекен пайӗсем асаплӑн, йӗрипен вилсе пырассин ҫулӗ. Вӗсем ҫӗрнинчен пуринчен малтан тата пуринчен ытла пролетариатпа хресченсем асап курассӗ. Револђуцилле ҫул вӑл—хӑвӑрт иртекен, пролетариатшӑн сахалтарах ыраттаракан операци ҫулӗ, ҫӗрекен пайсене тӳрех касса пӑрахмали ҫул, монархи тата ӑна тивӗҫлӗ йӗрӗнчӗк, ирсӗр, ҫӗрӗк тата ҫӗрнипе сывлӑша пӑсакан учрежденисем тӗлӗшпе сахалтарах уступка тӑвассин тата сахалтарах сыхланассин ҫулӗ» (ҫавӑнтах, стр. 57-58).

„Ҫавӑнпа та пролетариат, тенӗ малала Ленин, буржуази пӑрӑнса каймӗ-ши тесе калакан ассӑр та хӑйне тивӗҫсӗр канашсене йӗрӗнсе айаккала сирсе пӑрахса, республикӑшӑн малти ретсенче кӗрешет те ӗнтӗ“ (ҫавӑнтах, стр. 94).

Пролетариат револђуцине йӗртсе пырас майсем **чӑннипех пурнӑҫа кӗччӗр** тесен, пролетариат **ӗҫре** буржуалла револђуцин ҫулпуҫӗ, руководителӗ пулса тӑтӑр тесен,—ҫакна тума Ленин шучӗпе сахалтан та икӗ услови кирлӗ.

Ҫакна тума, пӗрремӗшӗнчен, пролетариатӑн—патша йӗркине татӑклӑ ҫӗнтерессишӗн интересленекен тата пролетариат йӗртсе прассине кӑмӑлласа илме пултаракан союзник пулни кирлӗ. Ҫакна тума йӗртсе пырас идейӑ хӑй хушнӑ, мӗншӗн тесен йӗртсе пымалисем ҫук пулсан, йӗртсе пыракан та йӗртсе пыракан пулма пӑрахаť, илсе пымалисем ҫук пулсан, ҫулпуҫӗ те ҫулпуҫ пулма пӑрахаť. Ҫавӑн пек союзник хресченсем пулса тӑрассӗ, тесе шутланӑ Ленин.

Ҫакна тума, иккӗмӗшӗнчен, револђуцине йӗртсе пырассишӗн пролетариата хирӗҫ кӗрешекен тата хӑй пӗртен-пӗр руководителӗ пулса тӑма тӑрӑшакан класа йӗртсе пырас ҫӗртен хӗссе кӑлармала тата тӑр пӗччен тӑратса хӑвармала. Ҫакна тума та ҫавӑн пекех йӗртсе пырас идейӑ хӑй хушнӑ, вӑл идейӑ револђуцин икӗ руководителӗ пулма пултарассине пӗтерсе хураť. Ҫавӑн пек клас либераđнӑй буржуази пулса тӑраť, тесе шутланӑ Ленин.

„Демократисӑмшӑн, тесе ҫырнӑ Ленин, пролетариат анчах вӗҫне ҫитиччен кӗрешме пултараť. Унӑн револђуцилле кӗрешӗвне хресченсен масси хутшӑнсан ҫеҫ вӑл демократисӑмшӑн ҫӗнтерӳлле кӗрешекен пулса тӑма пултараť“ (ҫавӑнтах, стр. 65).

Малала тата:

„Хресченсем хушшинче вакбуржуалла элементсемпе пӗрлех ҫурма пролетарилле элементсен масси те пур. Ҫакӑ вӑл хресченсене те тӗрексӗр тӑваť, пролетариата уйрӑм класла партине пӗтӗҫме хушаť. Анчах хресченсен тӗрексӗрлӗхӗ буржуази тӗрексӗрлӗхӗнчен тӗпренех уйрӑлса тӑраť, мӗншӗн тесен халђхи вӑхӑтра хресченсем уйрӑм харпӑрлӑха пӗр чакмасӑр сыхласа тӑрассишӗн мар, ҫак уйрӑм харпӑрлӑхӑн тӗп формисенчен пӗрне—помещиксен ҫӗрӗсене туртса илессишӗн ытларах интересленеҫҫӗ. Ҫакӑн пирки вӗсем социализмла пулса тӑмаҫҫӗ те, вакбуржуалла пулма пӑрахмаҫҫӗ пулин те, хресченсем пӗтӗмпех тата татӑклӑнах демократилле револђуци майлӑ пулма пултараҫҫӗ. Хресченсене ҫутта кӑларакан револђуцилле событисем пулса пырасси буржуази сутӑннипе тата пролетариат пӑрӑннипе ытла та ирех пӗтсе лармасан, хресченсем пурпӗрех демократилле револђуци майлӑ пулаҫҫӗ. Ҫак условисене пула хресченсем пурпӗрех револђуципе республика тӗрекӗ пулса тӑраҫҫӗ, мӗншӗн тесен хресченсене пӗтӗмӗшпех ҫӗнтернӗ револђуци ҫеҫ ҫӗр реформи йӗнӗпе **пурне те**, хресченсем мӗн тӑвас тенине, вӗсем ӗмӗтленнине, вӗсене чӑн-чӑнах кирлисене пурне те пама пултараť“ (Ленин, т. VIII, стр. 94—95).

Боđшевиксен ҫакӑн пек тактики „буржуалла классене револђуци ӗҫӗнчен пӑрса яраť, ҫапла вара револђуци анлӑшне вайсӑрлатаť“, тесе међшевиксем хирӗҫленине тишкӗрсе, тата међшевиксен хирӗҫлевӗсене „револђуцине сутакан тактика“, „пролетариата буржуалла классен мӗскӗн хӳрешки туса хуракан тактика“ вырӑнне хурса, Ленин ҫапла ҫырнӑ:

„Вырӑссен ҫӗнтерӳлӗ револђуцинче хресченсем мӗнле вырӑн йышӑнса тӑрассине кам чӑннипех ӑнланаť, вӑл буржуази пӑрӑнса кайсан, револђуци анлӑшӗ вайсӑрланаť тесе калама пултарайман пулӗччӗ. Мӗншӗн тесен, чӑннипе ӗҫре вырӑс револђуцин чӑн-чӑн анлӑшӗ буржуази пӑрӑнса кайсан тин, хресченсен масси пролетариатпа пӗрле активлӑ револђуционер пулса тухсан тин пуҫланаť, ҫавӑн чухне тин вӑл буржуалла-демократилле переворот тапхӑрӗнче пулма пултаракан чӑн-чӑнах пысӑк, чи анлӑ револђуци пулӗ. Вӗҫне ҫитиччен пӗр пӑрӑнмасӑр пырас тесен, пирӗн демократилле револђуцин буржуази пурпӗрех вӗҫне ҫитиччен каймасӑр тӑрассине сийенсӗрлетме пултаракан, урӑхла каласан, ӑна йӑтарласах „пӑрса йама пултаракан“ вайсем ҫине таянмала“ (ҫавӑнтах, стр. 95—96)

Ҫавӑн пек ӗнтӗ буржуалла револђуцин ҫулпуҫӗ ҫинчен, пролетариат ҫинчен калакан тӗп тактикӑлла положени, пролетариатӑн буржуалла револђуцири гегемонийӗ (йӗртсе пырас ролӗ) ҫинчен калакан тӗп тактикӑлла положени. Вӑл положенине Ленин хӑйӗн „Две тактики социал-демократии в демократической революции“ ятлӑ кӗнекинче тарӑнӑн ҫутатса панӑ.

Ҫакӑ вӑл буржуалла-демократилле револђуцинчи тактика ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе марксисла партин ҫӗнӗ установки пулнӑ, вӑл установка ҫав вӑхӑтчен марксисла арҫеналра пулнӑ тактикӑлла установкӑсенчен тӗпренех уйрӑлса тӑнӑ. Ку таранччен ӗҫ ҫапла пулнӑ: буржуалла револђуцисенче, сӑмахран, Хӗвеланӑҫӗнче револђуцине йӗртсе пырасси буржуази аллине йулса пынӑ, пролетариат ирӗксӗрех ӑна пулӑшса тӑраканӗ пулнӑ, хресченсем вара буржуази резервӗ пулнӑ. Марксиссем ҫавӑн пек комбинаци мӗн чухлӗ те пулин пурпӗрех пулмала тенӗ, анчах ҫавӑнтах—ун пек чухне пролетариатӑн мӗн май килнӗ таран хӑйӗн ҫывӑхри класла требованийӗсемшӗн тӑмала тата унӑн хӑйӗн политикӑлла парти пулмала, тесе асӑрхаттарнӑ. Халӗ, ҫӗнӗ историлле обстановкӑра, Ленин установки тӑрӑх ӗҫ ҫапла ҫаврӑнса тӑнӑ: пролетариат буржуалла револђуцине йӗртсе пыракан вӑй пулса тӑнӑ, револђуцине йӗртсе пырассинчен буржуазине сирсе йанӑ, хресченсем вара пролетариат резервӗ пулса тӑнӑ.

Пролетариат гегемонийӗшӗн Плеханов „та тӑнӑ“, тесе каланисем вӗсем—нимӗн те чухламан пирки каланӑ сӑмахсем. Плеханов пролетариат гегемони идейипе вӗҫкӗнленсе, ӑна сӑмахпа йышӑнма хирӗҫ пулман,—ку тӗрӗс, анчах ӗҫре вӑл ҫак идейӑн тӗп шухӑшне хирӗҫ тӑнӑ. Пролетариат гегемонийӗ вӑл пролетариатпа хресченсем хушшинче **союз** тытса пырас политикӑна пурнӑҫа кӗртнипе, либераđнӑй буржуазине **тӑр пӗччен** тӑратса хӑварас политикӑна тытса пынипе пролетариат буржуалла револђуцире йӗртсе пырассине пӗлтерет, ҫав вӑхӑтрах, паллӑ ӗнтӗ, Плеханов либераđнӑй буржуазине тӑр пӗччен тӑратса хӑварас политикӑна **хирӗҫ**, либераđнӑй буржуазипе **килӗшӳ** тӑвас **политикӑшӑн**, пролетариатпа хресченсем хушшинче союз тӑвас политикӑна **хирӗҫ** тӑнӑ. Чӑннипе Плехановӑн тактикӑлла установки пролетариатӑн гегемонине йышӑнман међшевикла установка пулнӑ.

2) Патша йӗркине сирпӗтсе антармали тата демократилле республикӑна кӗрешсе илмели чи кирлӗ средства вӑл—халӑхӑн ҫӗнтерӳлӗ восстанийӗ пулаť, тесе шутланӑ Ленин. Међшевиксем пек мар, урӑхла, Ленин ҫапла шутланӑ: „**пӗтӗм демократилле револђуцилле йухӑм ӗнтӗ хӗҫпӑшаллӑ восстани кирли патне илсе ҫитерчӗ**“, „восстани тума пролетариата организацилессине“ ӗнтӗ „кун йӗркине партин чи пысӑк, тӗпре тӑракан тата чи **кирлӗ** задачисенчен пӗрин вырӑнне хурса кӑларса тӑратнӑ“, „пролетариата хӗҫпӑшаллантарма тата восстанине тӳрех йӗртсе пыма **чи татӑкла та кирлӗ ӗҫсене туса иртермеле**“ (Ленин, т. VIII, стр. 75).

Массӑсене восстани патне илсе пыма тата восстанине хӑйне пӗтӗм халӑхӑн восстанийӗ туса йама массӑсене, вӗсен револђуцилле пуҫарулӑхне уҫса йама, вӗсене восстани тума организацилеме тата патша влаҫӗн аппаратне йӗркерен кӑларма пултаракан лозунгсемпе чӗнӳсем пама кирлӗ, тесе шутланӑ Ленин. Ҫавӑн пек лозунгсем—партин III-мӗш сйесӗн тактикӑлла решенийӗсем пулса тӑраҫҫӗ, тенӗ Ленин; ҫак решенисене хӳтлесе ҫырнӑ Ленин хӑйӗн „Две тактики социал-демократии в демократической революции“ ятлӑ кӗнекине.

Ун пек лозунгсем ҫаксем пулаҫҫӗ тенӗ вӑл:

а) „восстани пуҫламӗшӗнче тата восстани пулса пынӑ вӑхӑтра та пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулса тӑма пултаракан массӑлла политикӑлла стачкӑсемпе“ усӑ курасси (ҫавӑнтах, стр. 75);

б) „револђуцилле майпа 8 сехетлӗ ӗҫ кунӗ тӑвассине тата рабочи класӑн черетре тӑракан ытти требованийӗсене халех пурнӑҫа кӗртессине“ организацилесси (ҫавӑнтах, стр. 47);

в) револђуцилле майпа „пур демократилле улӑштарусене те“, помещиксен ҫӗрӗсене конфискацилесси таранах, туса ирттерме „халӑх хресченсен револђуцилле комитечӗсене организацилесси“ (Ленин, т. VIII, стр. 88);

г) рабочисене хӗҫпӑшаллантарасси.

Кунта уйрӑмӑнах икӗ тӗл интереслӗ:

Пӗрремӗшӗнчен, хуласенче 8 сехетлӗ ӗҫ кунӗ тата ялсенче демократилле улӑштарусем тӑвассине **револђуцилле майпа** пурнӑҫа кӗртес тактика, урӑхла каласан, влаҫсене ним вырӑнне те хумасӑр, саккунсене ним вырӑнне те хумасӑр, влаҫа та, саккуна та йышӑнмасӑр халиччен пулнӑ саккунсене ҫӗмӗрсе, хӑйӗн ирӗкӗпе, револђуцилле майпа ҫӗнӗ йӗркесем туса хурассине пурнӑҫа кӗртни. Ҫакӑ вӑл ҫӗнӗ тактикӑлла средства пулнӑ, унпа усӑ курни патша влаҫӗн аппаратне ним тӑваймин туса хунӑ, массӑсен активлӑхӗпе творчествӑлла пуҫарулӑхне уҫса йанӑ. Ҫак тактика никӗсӗ ҫинче хуласенче револђуцилле стачка комитечӗсем тата ялсенче хресченсен револђуцилле комитечӗсем ӳссе ҫитӗннӗ, вӗсенчен пӗрремӗшӗсем кайран рабочисен депутачӗсен Совечӗсем, иккӗмӗшӗсем—хресченсен депутачӗсен Совечӗсем пулса тӑнӑ.

Иккӗмӗшӗнчен, массӑлла политикӑлла стачкӑсемпе усӑ курни, пӗтӗмӗшлӗ политикӑлла стачкӑсемпе, кайран револђуци пынӑ чухне массӑсене револђуцилле мобилизацилес ӗҫре пӗрремӗш вырӑн йышӑнса тӑнӑ стачкӑсемпе усӑ курни. Ҫакӑ вӑл пролетариат аллинче, ҫӗнӗ, пит те кирлӗ хӗҫпӑшал пулнӑ, вӑл ку таранччен марксисла партисен

Малали 3-мӗш страницӑра

МАЛАЛИ.

практикинче пулман, кайарахпа вăл гражданства правине йышăннă.

Ленин шутланă: халăхăн çĕнтерўлĕ восстанине пула патша правительстви вырăнне революцилĕ вăхăтлăх правительствă пулмала. Революцилĕ вăхăтлăх правительствăн задачи вăл—революци кĕрешсе илнисене çирĕплетсе лартасси, контрреволюци хирĕç тăнине путарса лартасси тата Рŏççийăри социал-демократилĕ рабочи партин программă-минимумне пурнăçа кĕртесси пулса тăрать. Çак задачăсене пурнăçа кĕртмесĕр патша йĕркине татăклăн çĕнтерме çук, тесе шутланă Ленин. Çак задачăсене пурнăçа кĕртес тата патша йĕркине татăкланах çĕнтерес тесен, революцилĕ вăхăтлăх правительствă йалан\и пек правительствă мар, çĕнтерне классен, рабочисемпе хресченсен диктатурин правительстви пулмала, вăл пролетариатпа хресченсен революцилĕ диктатури пулмала. Марксăн: „революци хыççăн пулнă кирек мĕнле вăхăтлăх государствăлă тытăм та диктатура тата çитменнине çирĕп диктатурă ыйтать“ тенĕ паллă положенине кăтартса парса, Ленин çак вывăд патне пынă: революцилĕ вăхăтлăх правительствă, вăл патша йĕркине татăкланах çĕнтерес тет пулсан, пролетариатпа хресченсен диктатури пулнисĕр пуçне урăх нимĕн те пулма пултараймасть.

„Революци патша йĕркине татăклăн çĕнтерни, тесе çырнă Ленин, **вăл пролетариатпа хресченсен революцилĕ-демократилĕ диктатури пулать**... Çавăн пек çĕнтерў вара шăпах диктатурă пулĕ, урăхла каласан, унăн ку йе ытти „легаԓнăй“, „мирлĕ майпа“ тунă учрежденисем çине мар, пурпĕрех çар вăйĕ çине, массăсене хĕçпăшаллантарни çине, восстани çине таянмала пулать. Çакă вăл диктатурă кăна пулма пултарать, мĕншĕн тесен пролетариатпа хресченсене халех те пит те кирлĕ улăштарусене ĕçе кĕртни помещиксем те, шултра буржуасем те, патша влаçĕ те хайарран хирĕç тăрасси патне илсе пырать. Диктатурăсăр вĕсем хирĕç тăнине пĕтерсе хума, контрреволюцилĕ хăтланусене çапса аркатма май çук. Анчах вăл, паллă ĕнтĕ, социалисăмлă диктатурă мар, демократилĕ диктатурă пулать. Вăл (революци аталанăвĕн хушăри чылай пусăмĕсемсĕр) капиталисăмăн никĕсĕсене пырса тĕкĕнме пултараймасть. Вăл, лайăх пулсан та, çĕр харпăрлăхне хресченсене усăлăн тĕпренех валеçсе пама, вĕçне çитиех пыракан тата тулли демократисăма республика таранччченех çитерме, йалти йăларан анчах мар, хапрăкри йăларан та пĕтĕм азиатлă, чуралă йĕркесене тымарĕпех кăларса ывăтма, рабочисен пурнăçне чăнласах лайăхлатассипе пурнăç çўлĕшне ўстерессине пуçласа йама, йулашкинчен—пахалăх тĕлĕшпе мар, хисеп тĕлĕшпе йулашки—революцилĕ пушара Йевропăна куçарма пултарать. Çакăн пек çĕнтерў пирĕн буржуалă революцинчен нимĕн чухлĕ те социалисăмлă революци туса хумасть-ха; демократилĕ переворот буржуалă обшчĕствăлă-економикăлă çыхăнусен рамкисенчен тўрĕмĕнех тухмасть; анчах çапах та çавăн пек çĕнтерў пĕлтерĕшĕ Рŏççийă та, пĕтĕм тĕнче те малашне аталанассишĕн питех те пысăк пулать. Çакă Рŏççийăра пуçланнă революцин татăклă çĕнтерĕвĕ çĕкленĕ таран пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн революцилĕ вăйне нимĕн те çĕклеймест, пролетариата пĕтĕмпех çĕнтересси патне илсе пыракан унăн çулне çав революци пек вăйлăн нимĕн те кĕскетеймест“ (çавăнтах, стр. 62—63).

Революцилĕ вăхăтлăх правительствă çине тата унта социал-демократи хутшăнасси çине социал-демократи мĕнле пăхнине илес пулсан, Ленин партин III-мĕш сйесĕ çак ыйту тăрăх йышăннă резолюцине пĕтĕмпех хўтленĕ; вăл резолюци çапла калать:

„Вăйсем мĕнле шайланса тăнине тата малтанах тĕрĕс палăртса хума çук ытти фактăрсене кура, мĕнпур контрреволюцилĕ ĕçсем тума хăтланнисене хирĕç хайарран кĕрешсе пыма тата рабочи класăн хăйне уйрăм интересĕсемшĕн тăма пирĕн партин уполномоченнăйĕсем революцилĕ вăхăтлăх правительствăна хутшăнни пулма пултарать; унта хутшăнма кирлĕ услови: парти хăйĕн уполномоченнăйĕсене çирĕп контроԓ туса тăни тата тĕппипех социалисăмлă переворот тăвасси патне пыма тăрăшакан, çавăнпа буржуазин пĕтĕм партийĕсене хирĕç кĕрешекен социал-демократин ирĕклĕхне пĕр пăрăнмасăр сыхласа тăрасси пулать; социал-демократи революцилĕ вăхăтлăх правительствăна хутшăнма май пулассипе май пулас çуккине пăхмасăрах, социал-демократи йертсе пыракан хĕçпăшаллă пролетариат йенчен революци ĕнтерсе илнисене сыхлас, çирĕплетес тата сарас шутпа вăхăтлăх правительствăна йаланах хĕссе тăма кирли çинчен пролетариатăн чи сарлака сийĕсем хушшинче пропагандăламала“ (Ленин, т. VIII, стр. 37).

Вăхăтлăх правительствă вăл çапах та буржуалă правительствă пулать, Франциri Миԓйеран йатлă социалис Францин буржуалă правительствине хутшăнса тунă йăнăшах тăвас мар тесен, социал-демократсен çавăн пек правительствăна хутшăнмала мар, тесе меңшевиксем хирĕçлесе каланисене Ленин çапла кăтартса панипе сирсе йанă: „меңшевиксем кунта икĕ расна йапалана арпаштарса йарса, ыйту çине хăйсем марксисла пăхма пултарайманнине палăртаççĕ: Францире социалиссем **реакцилĕ** буржуалă правительствăна çĕршывра революцилĕ лару-тăру **пулман** тапхăрта хутшăнасси çинчен сăмах пынă, çакă ĕнтĕ социалиссене çавăн пек правительствăна хутшăнма хушман, Рŏççийăра вара, социалиссем **революци çĕнтерĕвĕшĕн** кĕрешекен **революцилĕ** буржуалă правительствăна революци **хĕрсе пынă** тапхăрта хутшăнасси çинчен сăмах пырать,—ку ĕнтĕ контрреволюцине „айалтан“, тултан кăна мар, тата „çўлтен“ те, правительствă ăшĕнчен те çĕмĕрсе пыма социал-демократсене çавăн пек правительствăна хутшăнма **йурамала тăвакан**, майлă условисенче—**обйазательнă** хутшăнмала тăвакан обстойательствă пулать.

3) Буржуалă революци çĕнтерĕвĕшĕн тата демократилĕ республикă çĕнсе илессишĕн тăрса, Ленин демократилĕ тапхăр çинчех чарăнса тăма тата буржуалă-демократилĕ задачăсене пурнăçа кĕртнипе революцилĕ йухăмăн анлăшне пўлсе лартма пачах та шутламан. Ленин йăлтах урăхла шутланă: демократилĕ задачăсене пурнăçа кĕртнĕ хыççăнах пролетариатпа експлуатациленекен ытти массăсен кĕрешĕвĕ **социалисăмлă** революцишĕн пуçланса каймала пулать. Ленин çакна пĕлсе тăнă тата вăл: социал-демократин обйазаннăçĕ—буржуалă демократилĕ революци социалисăмлă революцине **çитĕнсе куçса пытăр** тесе, пур ĕççене те тăвасси пулать, тесе шутланă. Ленин пролетариатпа хресченсен диктатури, революци патша йĕркине çĕнтернĕ хыççăн, çакăнпах революцине **чарса лартма мар**, революци пулса пынине мĕн май килнĕ таран ытларах **тăсма**, контрреволюцин йулашкийĕсене тĕппипех пĕтерме, революци çулăмне Йевропăна куçарма тата, çак вăхăтра пролетариата политикă тĕлĕшĕнчен вĕренсе усăлма тата аслă çара организацилеме май парса,—тўрех социалисăмлă революци патне куçмала тума кирлĕ пулнă.

Буржуалă революцин анлăшĕ çинчен тата çак анлăха марксисла парти мĕнле характĕр памали çинчен каласа, Ленин çапла çырнă:

„Самодержави хирĕç тăнине вăйпа çĕмĕрсе тăкма тата буржуази тĕрексĕрлĕхне сийенсĕрлетме пролетариатăн, хăйĕн çумне хресченсен массине хутшăнтарса, демократилĕ переворота вĕçне çитичченех туса ирттермеле. Буржуази хирĕç тăнине вăйпа çĕмĕрсе тăкма тата хресченсемпе вакбуржуазин тĕрексĕрлĕхне сийенсĕрлетме пролетариатăн, хăйĕн çумне халăхăн çурмапролетарилĕ елеменчĕсене хутшăнтарса, социалисăмлă переворот тумала. Çакăн пек ĕнтĕ пролетариатăн задачисем; вăл задачăсене новоискровецсем (урăхла каласан, меңшевиксем. —Ред.) революцин анлăшĕ çинчен калакан хăйсен пур сăмах-йумахĕсемпе резолюцийĕсенче те ансăрăн ăнланаççĕ“ (Ленин, т. IV, стр. 96).

Йе тата:

„Пĕтĕм халăх пуçĕнче, уйринчен ытла хресченсен пуçĕнче пырса —тулли ирĕклĕхшĕн, вĕçне çитех демократилĕ переворотшăн, республикăшăн! Пĕтĕм ĕççыннисемпе експлуатациленекенсен пуçĕнче пырса—социалисăмшăн! Революцилĕ пролетариатăн политики ĕçре çавăн пек пулмала, çавăн пек клас лозункĕ, вăл рабочи партин кашни тактикăлă ыйтăвне, практикăлă кашни утăма витĕр витсе палăртса тăмала“ (çавăнтах, стр. 105).

Нимĕнле ăнланман вырăнсем те ан йулччăр тесе, Ленин хăйĕн „Две тактики“ йатлă кĕнеки çутта тухнă хыççăн икĕ уйăх иртсен, „Отношение социал-демократии к крестьянскому движению“ текен статйара çапла ăнлантарса парать:

„Демократилĕ революцирен епĕр çавăнтах, шăпах хамăрăн вăй çитнĕ таран, аслăнлă тата организациленнĕ пролетариатăн вăйĕ çитнĕ таран, социалисăмлă революци патне куçма тытăнатпăр. Епĕр татти-сыпписĕр революцишĕн тăратпăр. Епĕр çурма çул çинче чарăнса тăмапăр“ (çавăнтах, стр. 186).

Çакă вăл буржуалă революципе социалисăмлă революци хушшинчи çыхăнусен ыйтăвĕ тĕлĕшпе çĕнĕ установкă пулнă, тўрех социалисăмлă революци патне куçма буржуалă революци вĕçĕ тĕлне вăйсене пролетариат тавра çĕнĕле вырнаçтарса тăратассин çĕнĕ теорийĕ, — буржуалă-демократилĕ революци социалисăмлă революцине **ўссе куçассин** теорийĕ пулнă.

Çак çĕнĕ установкăна туса хатĕрленĕ чух Ленин, пĕрремĕшĕнчен, иртнĕ ĕмĕрĕн хĕрĕхĕмĕш çулĕсен вĕçĕнче Маркс „Обращение к Союзу коммунистов“ тесе чĕнсе каланинче татти-сыпписĕр революци çинчен кăларса тăратнă паллă положенийĕ çине, иккĕмĕшĕнчен, Маркс 1856 çулта Енгĕԓс патне йанă çырура хресченсен революцилĕ йухăмне пролетарилĕ революципе çыхăнтарма кирли çинчен каланă паллă шухăш çине таяннă. Енгĕԓс патне йанă çырура Маркс каланă: „Германире пĕтĕм ĕç пролетарилĕ революцине хресченсен вăрçин мĕнле те пулин иккĕмĕш изданийĕпе пулăшма май пулнинчен килет“. Анчах Марксăн çак генилĕ шухăшĕсене Маркспа Енгĕԓс хăйсем кайарахпа çырнă кĕнекесенче аталантарман. II-мĕш Интернационалăн теоретикĕсем вара пур майсемпе те вĕсене тупăка хурса пытарма тата манăçа кăларма тăрăшнă. Марксăн манăçа кăларнă положенийĕсене çутта туртса кăларса, вĕсене пĕтĕмпех тепĕр хут ĕçе йарас задачă Ленин çине ўкнĕ. Анчах, Марксăн çак положенийĕсене тепĕр хут ĕçе йанă чухне, Ленин вĕсене ахаԓ çеç тепĕр хут каласа панипе чарăнса тăман, чарăнса тăма та пултарайман, вăл вĕсене малала аталантарса пынă, ĕçе социалисăмлă революцин обйазательнăй моменчĕ пулса тăракан çĕнĕ момент кĕртсе,—пролетарилĕ революци çĕнтерĕвĕн **условийĕ** пулса тăракан хулари тата йалти пролетариатпа çурмапролетарилĕ елементсен **союзне** кĕртсе, социалисăмлă революцин тĕплĕ те йĕркелĕ теорине туса хатĕрленĕ.

Çак установкă хĕвеланăç Йевропăри социал-демократин тактикăлă позицийĕсене çĕмĕрсе тусан пек салатса йанă, вĕсен тактики çапла пулнă: буржуалă революци хыççăн хресченсен масси, çав шутрах чухăнсен масси те,—обйазательнă революцирен пăрăнса каймала, çавна пула буржуалă революци хыççăн революци нумай хушши **чарăнса тăнă** тапхăр, 50—100 çул хушши, тата та ытларах пулмасан, „лăпланса ларнă“ вăрах тапхăр пулмала, вăл тапхăр хушшинче вара, çĕнĕ, социалисăмлă революци ваԓԓи вăхăт киличчен пролетариатăн „мирлĕн“ експлуатациленмеле, буржуази „саккунлă“ пуйса пымала.

Çакă вăл **социалисăмлă** революцин çĕнĕ теорийĕ пулнă, ăна **пĕтĕм** буржуазине хирĕç пĕр тăр пĕччен тăракан пролетариат мар, пролетариат—гегемон, халăхăн çурмапролетарилĕ елеменчĕсемпе,—„ĕççыннисен тата експлуатациленекенсен массисемпе“ **союз** тытакан пролетариат пурнăçа кĕртсе пынă.

Çак теори тăрăх, пролетариатăн буржуалă революцири пролетариатпа хресченсен **союзĕ пур чухнехи** гегемонийĕ пролетариатăн социалисăмлă революцири пролетариатпа ытти ĕççыннисен тата експлуатациленекенсен массисен союзĕ пур чухнехи гегемонине ўссе куçмала, пролетариатпа хресченсен демократилĕ диктатури пролетариатăн социалисăмлă диктатури ваԓԓи никĕс хатĕрлемеле пулнă.

Çак теори хулари тата йалти çурмапролетарилĕ массăсем революцилĕ пулма пултарассине йышăнман тата „буржуазипе пролетариатсăр пуçне, пирĕн патра оппозицилĕ йе революцилĕ комбинацисем тайанса тăма пултаракан урăх обшчĕствăлă вăйсем курмастпăр“ (Плеханăв сăмахĕсем, шăпах Хĕвеланăç Йевропăри социал-демократсен йаланхи сăмахĕсем) текен Хĕвеланăç Йевропăри социал-демократсем çўретекен теорине ўпĕнтерсе йанă.

Хĕвеланăç Йевропăри социал-демократсем çапла шутланă: социалисăмлă революцире пролетариат **пĕтĕм** буржуазине хирĕç **пĕр пĕччен** пулать, тенĕ. Вĕсем капитал пролетарисене анчах мар, тата капиталисăм пусарса лартнă, обшчĕствăна капиталисăм пусмăрĕнчен кăларассишĕн кĕрешес ĕçре пролетариатăн сойузникĕсем пулма пултаракан хулари тата йалти çурмапролетарилĕ сийсен миллионĕсене те експлуатациленĕ факта шута илесшĕн пулман. Çавăнпа та Хĕвеланăç Йевропăри социал-демократсем çапла шутланă: Йевропăра социалисăмлă революци тума условисем пулса çитмен-ха, вăл условисем, обшчĕствăн економики малала аталанса пынине пула пролетариат нацин ытларахăшĕ, обшчĕствăн ытларахăшĕ пулсан анчах пулса çитнĕ теме пулать, тенĕ.

Социалисăмлă революцин ленинла теорийĕ Хĕвеланăç Йевропăри социал-демократсен çакăн пек çĕрĕк тата пролетариата хирĕçле установкине пуçхĕрлĕн ўпĕнтерсе йанă.

Ленин теорийĕнче социалисăм уйрăм илнĕ пĕр çĕршывра çĕнтерме пултарасси çинчен тўрех калакан вывăд пулман-ха. Анчах вăл теорире хаԓтерех йе кайранрах çавăн пек вывăд тума кирлĕ тĕп елементсем пурте йе пурте тенĕ пекех пулнă.

Паллă, çавăн пек вывăда Ленин 1915 çулта, урăхла каласан 10 çул иртсен, тунă.

Çавăн пек ĕнтĕ Ленин хăйĕн „Две тактики социал-демократии в демократической революции“ йатлă историлĕ кĕнекинче тарăннăн аталантарса çутатса панă тактикăлă тĕп положенисем.

Ленин çырнă кĕнекен историлĕ пĕлтерĕшĕ пуринчен малтан çакăнта пулса тăрать: вăл меңшевиксен вакбуржуалă тактикăлă установкине идейă тĕлĕшпе çĕмĕрсе тăкнă, Рŏççийăри рабочи класа буржуалă-демократилĕ революцине малала сарса пыма, патша влаçĕ çине çĕнĕрен тапăнма хĕçпăшаллантарнă тата вырăс социал-демократсене буржуалă революци социалисăмлă революцине ўссе куçма кирлин малашлăхне уççăн кăтартса панă.

Анчах Ленин кĕнекин пĕлтерĕшĕ çакăнпах пĕтмест-ха. Унăн питех те пысăк пĕлтерĕшĕ çакăнта пулса тăрать: вăл марксисăма революцин çĕнĕ теорийĕпе пуйанлатнă тата боԓшевикла партин революцилĕ тактикин никĕсне хывнă, çак тактикă пулăшнипе пирĕн çĕршыври пролетариат 1917 çулта капиталисăма çĕнтерчĕ.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

ДА ЗДРАВСТВУЕТ МНОГОМИЛЛИОННЫЙ ДВАЖДЫ ОРДЕНОНОСНЫЙ ЛЕНИНСКО-СТАЛИНСКИЙ КОМСОМОЛ!

Мартынăв художник тунă плакат, ăна „Искусство“ издательстви ПСÇЛКС XX çул тултарнă тĕле кăларать.

ПАРТИ ПУРНĂÇЕ

Тутаркас районĕнчи парторганизацин пухăвĕ

МАН СЕНТЕР. Октаберĕн 11-мĕшĕнче Тутаркас районĕнчи парторганизацин пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура облăçри XIX-мĕш партконференцин ĕçĕсем çинчен ПСК(б)П райкомĕн çекретарĕ В. Шиверăв йулташ доклад туса пачĕ.

Пренире тухса калана йулташсем пурте облăçри партконференци решенисене ырларĕç. Пренире пурĕ 27 çын тухса каларĕç.

Тухса калана йулташсем халăх тăшманĕсем пур ĕçре те, уйрăмăнах Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинче тата Шупашкарти çĕнĕ строительствăсене туса пĕтерес ĕçре чăрмантарни çинчен каларĕç.

Политикăлă тимсĕрлĕх кунта чи малтан ПСК(б)П райкомĕнче пулнă. ПСК(б)П райкомĕнче управдел тата йулашки вăхăтра учот пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ В. Проворăв 4.800 тенкĕ таран хăй çумне чикнĕ. Çав вăхăтрах парти пропагандийĕпе тата ытти ĕçсемпе семинарсем ирттерме „укçа çук“, тенĕ. Проворăв жулике райком хытă йатланипе çеç хăварнăшăн хытă критиклерĕç тухса калана йулташсем.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлана вăхăтра районри пур йалсоветсенче те агитколлективсем ĕçленĕ пулсан, халĕ Шиверăв йулташ пĕр агитколлектив ĕçĕ çинчен те каласа параймарĕ. ПСК(б)П райкомĕ 4 уйăх ытла ĕнтĕ агитколлектив руководителĕсене пухса семинар ирттермен.

Район укçа-тенкĕ, аш-какай планне тултарас ĕçре кайа йулса пыни пĕтĕмпех массăлă ĕçе туса пыманнинчен килет. Райĕçтăвком председателĕн ĕçĕсене туса пыракан Овчинникăв йулташ йалсоветсен секцисене пачах йертсе пыман. Чылай йалсоветсем çултаăк хушши йалсовет пленумĕсене ирттермен. Райĕçтăвком инструктăрĕсем йалсене тухса çўремеççĕ.

Пуху ПСК(б)П райкомне районри прокурор ĕçне туса пыракан Шчипцов пирки тивĕçлĕ решени йышăнма хушса хăварчĕ. Шчипцов йулташ ĕççыннисен жалăбисемпе питĕ начар ĕçлет. „Ударник“ тата „1-мĕш Май“ колхозри тăшманла çынсен ĕçĕсене вĕçне çитермесĕр 4 уйăх выртарать.

Пуху пур пуçламĕш организацисене те облăçри конференци йышăннă решенине пурнăçа кĕртме хушса хăварчĕ.

М. Исайĕв.

Ытлашши васкарĕç

ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне вĕренме мĕнле хатĕрленмели çинчен „Правда“ хаçатăн çентаберĕн 17-мĕшĕнче тухнă умстатйинче пит аван тата çителĕклĕ кăтартса панă. Парти историне вĕренес ĕçе пит тĕплĕн, васкамасăр тумала.

Анчах, Шуркассинчи (Шăхасан районĕ) учительсен кружокĕнче (пропагандист Иефремăв) çак чаплă документăн пĕрремĕш сыпăкне пĕр заңатире „вĕрентсе пĕтернĕ.“ Заңатине ытлашши васкаса, начар ирттернĕ. Ыйтусене çийелтен çеç шăйăрттарнă. Историри деятельсем çинчен ик-виç сăмахпа каласа иртсе кайнă.

Ку вăл пропагандис хăй те парти историне пĕр хут çеç вуланăран пулса тухнă. Вĕренекенсем çурри çеç заңатине хатĕрленсе пынă.

К. Йĕремейĕв

ПСК(б)П истори тăрăх лекцисем

Партин Шупашкар хула комитечĕпе парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ ПСК(б)П историн 1-мĕш сыпăкĕ тăрăх хулари пропагандиссем тата парти активĕ ваԓԓи лекцисем туса ирттерме тытăнчĕç.

Октаберĕн 15-мĕшĕнче парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕнче 1-мĕш лекци пулса иртрĕ.

Унта Ленинăн „Рŏççийăра капиталисăм аталанни“ кĕнекен пĕлтерĕшĕ çинчен Андрейĕв йулташ лекци вуласа пачĕ.

Г. Сахалкин.

Çтена хаçачĕсемпе вĕсен редколлегисем çинчен

Çтена хаçачĕ кăларасси вăл—политикăлă ĕç. Çтена хаçачĕ колхозри политикăлă вăй пуласси редколлеги членĕсене чи шанчăклă, партипе совет влаçĕн, халăхăн ĕçĕшĕн вăй хурса кĕрешекен çынсене суйланинчен килет. Çтена хаçачĕ колхозниксен массин коллективлă творчĕствăлă ĕçĕ пулса тăрать пулсан, редколлеги членĕсен ĕçне организацилесси—партипе комсомол организацисен хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать.

„Хаçатсăр ĕçлеме çук, хаçатсăр йертсе пыма çук“ тенине кашни парторганизацин, кашни коммунисăн ăнланса илмеле. Парторганизаци хаçат унăн аллинче политикăлă çивĕч хĕçпăшал пулса тăнине ăнланнă çĕрте пирĕн çтена хаçачĕсем йĕркелĕ тухса тăраççĕ. Вĕсем хăйсем тавра колхозри чи паллă çынсене пĕрлештерсе, агитацилĕ, политикăлă тата организацилĕ ĕçсене вăйлăн туса пыраççĕ.

Çакна Вăрнар МТС-чи 14-мĕш трактăр бригадинчи çтена хаçачĕн ĕçĕнчен лайăх курма пулать. Ку бригадăра пĕтĕмпех хĕрсем ĕçлеççĕ. Вĕсем кашни виçĕ кунра пĕр номĕр çтена хаçачĕ кăларса тăраççĕ. Ответлă редактăрĕ трактăристкă-стаханăвкă, ЧАССР Верховнăй Совет депутачĕ Харитонăвă йулташ. Хаçат тухиччен кунта ĕç дисциплини çителĕклĕ пулман, „Стаханăвкă“ хаçат ĕç дисциплинине пăсакансене критикленĕ, стаханăвкăсен паха опычĕсем çинчен тĕплĕн çырнă. Халĕ бригадăра ĕç нормине тултарман трактăристка çук. Стаханăвкăсемпе ударницăсем 9 çын „Стаханăвкă“ хаçатăн активлă корреспонденчĕсем пулса тăраççĕ.

Кун пек ырă тĕслĕхсем пирĕн татах та пур. Çтена хаçачĕ хăйĕн ĕçне кăтартсан, колхозниксем 10—15 кунта тухса тăракан хаçата 3—5 кунта пĕрре кăларса тăма ыйту лартаççĕ. Йĕлчĕк районĕнчи Тайăпа Ентри, Тутаркас районĕнчи „Колос“ колхозсенче çапла пулнă. Вăл колхозсенче халĕ çтена хаçачĕсене 5 кунта пĕр номĕр кăларса тăма тытăннă. Ку ĕнтĕ партипе комсомол организацисем çтена хаçачĕсене йертсе пынин, редколлеги членĕсене чи авторитетлă йулташсене суйланин, хаçат тавра колхозри активиссене пĕрлештернин результачĕ.

Анчах чылай колхозсенче çтена хаçачĕсем йĕркелĕ тухса тăмаççĕ-ха. Уйăхран уйăха тухса тăракан çтена хаçачĕсем нумай-ха. Çакан сăлтавĕ мĕнре? Парти организацисем хаçат кăларас ĕçре тĕп вырăнта тăракан çынсем редколлеги членĕсем çинчен манаççĕ, вĕсене йертсе пымаççĕ. Çавна пула редколлегисем час-часах саланса каяççĕ. Акă, Мăн Йавăшри (Хĕрлĕ Чутай р.) Сталин йачĕпе тăракан колхозра ийуң уйăхĕ хыççăн çтена хаçачĕ тухма пăрахнă. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани вăхăтĕнче кунта хаçат тухса тăнă, редколлеги те ĕçленĕ. Халĕ редколлеги членĕсем пурри-çуккине те пĕлмеççĕ. „Çтена хаçачĕ çук та, колхозра самокритикă та çук“, тесе çырать Филипп Çеменăв йулташ. Редколлеги членĕсем саланса кайни çинчен „Страж революции“ колхозран (Тутаркас р.), „Зерно“ колхозран (Елĕк р.) т. ыт. колхозсенчен те çырса пĕлтереççĕ. Çав çырусенче пуринче те çтена хаçачĕ тухнă вăхăтра колхозри ĕçсем ăнăçлă пынине, халĕ ĕçсем начарланнине палăртаççĕ.

Çак фактсем пирĕн çтена хаçачĕсен редколлегисене йертсе пырассине вăйлатма кирли çинчен тата тепĕр хут асăрхаттараççĕ. Партипе комсомол организацисен колхозри çтена хаçачĕсен редколлеги ĕçĕсемпе интересленмеле, вĕсене ĕçре пулăшмала. Ĕçлеме пултарайман, массă умĕнче авторитетсăр, шанчăксăр çынсене редколлегинче тытма кирлĕ мар.

Халĕ колхозсенче актив нумай. Стаханăвла йухăмпа социалисăмла ăмарту колхозсенче куԓтурăлă та пуйан пурнăçшăн хастарлă кĕрешекенсене нумай ўстерчĕç. Парти, комсомол, Осоавиахим тата ытти обшчĕствăлă организацисенче активиссем нумай çитĕнчĕç. Колхоз строительствине, социалисăм ĕçне малала йама пулăшакан обшчĕствăлă ĕçе колхозниксем хастарлă хутшăнаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем хаԓхи саманара, Сталинла Конституци саманинче пичет ĕçне хастарлă хутшăнма тăрăшаççĕ. Колхозсенчи стаханăвецсемпе ударниксем çтена хаçатне хăйсен опычĕсене пĕр-пĕрне памали, производствăри çитменлĕхсене критиклемели, производства, куԓтура, йăла тата ытти ыйтусем тăрăх тухса каламали вырăнне шутласа хаклаççĕ. Çапла вара, халĕ çтена хаçачĕсем пичетĕн чăн-чăн оргăнĕсем пулса тăма пур лайăх майсем те пур.

Партипе комсомол организацисем актива, çтена хаçачĕ кăларас ĕçре ĕçлекенсене вĕрентсе пулăшса пырсан, пирĕн кашни колхозри çтена хаçачĕ массăсен чăн-чăн организатăрĕ пулма пултарать.

Çтена хаçачĕсене йертсе пырасси—партипе комсомол организацисен хисеплĕ ĕçĕ.

„Иосиф Сталин“ тата „Ермак“ пăрçĕмренсем çинчи ăслăлăх ĕçĕсем

„Иосиф Сталин“ тата „Ермак“ пăрçĕмренсен инçетри Арктикăри похочĕсем çурçĕр тинĕс çулне малала алла илсе пырас ĕçре практикăлă пысăк усă кӳреççĕ. Карапсем иккĕшĕ те Арктикăн халиччен сăнаса вĕренмен пăрĕсем хушшинче 2.800 милĺă тăршшĕ çул тунă, вăл районсенче халиччен нихăçан та пĕр карап та ирĕклĕн ишсе çӳремен. Çак походсем ĕнтĕ, вăл районсенче карапсĕм çӳретме май çук текен шухăш йăнăш иккенне кăтартса пачĕç. Унти пăрсене вăйлă пăрçĕмренсем çăмăллăнах çĕмĕрсе тухма пултарнине кăтартнă.

„Иосиф Сталин“ тата „Ермак“ пăрçĕмренсен похочĕ вăхăтĕнче инçетри Арктикăра вичĕ тĕлте тăрăнри шыва сăнаса пăхма май килнĕ. Çапла сăнаса пăхнисем çакна кăтартса пăраççĕ: Котельнăй утравĕнчен çурçĕр йĕнче 200 метртан тăрăнарахра ăшă шывлă вăйлă йухăм пур, вăл шыв унта Атлантика океанĕнчен йухса кĕрет.

(ТАСС).

Мускав облăçĕнчи „оборонă кунĕсем“

Октăберти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнă йатпа Мускав облăçĕнчи районсенче „оборонă кунĕсем“ туса ирттереççĕ.

Вăл кунсенче ĕççыннисем противогазсем тăхăнса походсем тăваççĕ, колхозсемпе предприйатисенче сывлăшран тапăннинчен тата химилĕ тапăнуран сыхланма вĕренмели занйатисем ирттереççĕ, пулеметпа паллашаççĕ, винтовкă чăсĕсене вĕренеççĕ т. ыт. те.

Ногински, Ленински, Клински, Ухтомски районсенче тата облăçри ытти районсенче „оборонă кунĕсем“ туса ирттернĕ те ĕнтĕ.

Ногински районĕнче вĕренӳсене 50 пин çын ытла хутшăннă. Вăл кунă ирттерме ĕççыннисем тĕплĕн хатĕрленнĕ. Вăл районри Жуково колхозĕнче, бойевой тревогă пуçлансан, социалисăмлă харпăрлăха сыхлама постсем кăларса тăратнă. Сĕт-çу фермисенче ĕçлекен колхозницăсем ĕнесене противогаз тăхăнса сунă.

Октăбĕр уйăхĕнче Мускав облăçĕнчи районсенчен нумайĕшĕнче çавăн пек „оборонă кунĕсем“ туса ирттереççĕ. (ТАСС).

Специалиссен Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăвĕ

Мускаври Л. М. Каганович йачĕпе тăракан тормăз савăтĕнчи медно-литейнăй цех начальникĕ Иакăвлĕв йулташ Октăберти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнă тĕле хайĕн цехĕнче пур рабочисене те ĕç нормине тултарса пымала тума обйазательства илнĕ пулнă. Иакăвлĕв йулташ пуçарнипе формовачнăй плитасене тĕрĕслесе тухнă, ĕçшĕн çĕнĕле сдельнă-премилĕ çистемăпа тӳлемеле тунă. Çакăн пек туни ĕçтухăçлăхне ӳстернĕ: октăбĕр уйăхĕнче цех заданине тултарман кун пĕре те пулман. (ТАСС).

Парашӳтлă десант

Парашӳт спорчĕн маçтăрĕ Полежайĕв капитан каласа пани

Октăберĕн 3-мĕшĕнче кăнтăрла 12 сехетре чаç командирĕ мана штаба чĕнсе илчĕ. Комиссар Лобанăв йулташ мана телеграммă кăтартрĕ, телеграммăра „Родина“ самолйот екипажне тупни çинчен пĕлтернĕ. Самолйот ăçта ларнине те кăтартнă.

Чаç командирĕ Денисенко йулташ мана çапла карарĕ: манăн кĕске вăхăтрах пĕр ушкăн парашӳтисем хатĕрлемеле, апат-çимĕç илмеле, „Родина“ самолйот анса ларнă вырăна вĕçсе тухса каймала, самолйот екипажне пулăшу памала.

Пĕр минут та тăхтаса тăмасăр, епĕ çав ответлă заданине пурнăçа кĕртес ĕçе тытăнтăм. Врач Тихăнăв йулташ, чаçри чи паллă парашӳтиссенчен пĕри умне, епĕ çаканашкал задачă лартрăм: унăн кирлĕ пек медицинă хатĕрĕсем суйласа илмеле. Пирĕн группăн аслиаслă лейтенант Йеремин йулташ.

Октăберĕн 4-мĕшĕнче 14 сехетте 20 минутра епĕр вĕçсе тухрăмăр.

Ĕмĕтри хаклă тĕллев çывхарнăçем çывхарса килет. Айалта—шурлăх, тайга тата сопкăсем. Çавăнта пирĕн сикес пулат.

Йулашкинчен, епĕр „Родина“ самолйот тĕлĕнче. Сикмели вырăна пырса çитетпĕр. Епĕ самолйотран пуринчен те малтан уйăрăлтăм. Вăл манăн 301-мĕш сикӳ пулчĕ.

Мана хирĕç Полинă Осипенко тухрĕ. Епĕ ăна рапăрт патăм:

— Партипе правительствă заданийĕ тăрăх сире пулăшма килсе çитрĕмĕр!..

Алă паратпăр, йулташла чуптăватпăр. Нумайччен епĕр сăмах тупаймарăмăр. Йулашкинчен Полинă ыйтрĕ:

— Епĕр ларни çинчен, пурте лайăхах пулни çинчен, епĕр чĕрри çинчен партипе правительствă пĕлеççĕ-и, Сталин йулташ пĕлет-и?

Епĕ: пĕлеççĕ, тесе ответлерĕм. „Родина“ самолйотăн мухтавлă штурманĕ Маринă Раскова кунçулĕ пирки интересленсе ыйтусем патăм.

Епĕр пурте „Родина“ самолйот умне пухăнтăмăр. Часах сывлăшра моторсем кĕрлени илтĕнчĕ. Самолйотсем килеççĕ, вĕсем пире кирлĕ груз тумтир, апат-çимĕç т. ыт. те пăрахса памала.

Унтан калавсем пуçланчĕç. Икĕ паттăр лйотчицă шурлăхлă сĕмлĕхре, тискер кайăксемпе хĕвĕшекен тайгара иккĕшĕх тăрса йулнă лйотчицăсем мĕн чухлĕ интереслă йапала каласа памарĕç пулĕ пире. Епĕ пĕр чĕмсĕр итлерĕм. Епĕ çак чăн-чăн халăх героинисем çине, болшевиксен партийĕ, Сталин йулташ воспитани парса пăхса ӳстернĕ геройнйăсем çине пăхнăçем. манăн пĕтĕм ӳт-пĕвĕме, чунăма темĕнле каласа пама çук хавасла сĕклентерсе сунатлантарчĕ.

Каласрăмăр нумай. Сисĕнмесĕр ирттрĕ вăхăт. Каçхине 11 сехетре самолйот ăшĕнче çĕр каçма вырнаçса выртма тытăнтăмăр. Çĕрле темĕн кăштăртатни илтĕнчĕ: самолйот тавра тăхăшĕ çӳрет. Йереминпа епĕ пăшалсем илтĕмĕр, самолйот ăшĕнчен тухрăмăр та, пеме тытăнтăмăр. Пăшал пенинчен хăраса, тискер кайăк тарчĕ. Ирччен канăçлă çывăртăмăр.

Тайга çийĕн тӳлек ир пуçланчĕ. Кĕрхи сивĕ ир. Епĕр апатланса çеç ĕлкĕрнĕччĕ, пирĕн пата тăватă çын пырса çитрĕç. Вăл ушкăна Керби райĕçтăвком председателĕ Козлов йулташ—тайгари опытлă çулйĕрлевçĕ йертсе пынă. „Родина“ анса ларнă вырăна çитиччен ăна тата унăн йултăшĕсене сахал мар чăрмавсем çĕнтерме тивнĕ.

Часах самолйотсем вĕçсе пычĕç. Вĕсем Маринă Раскова хăш вырăнтине пĕлтерсе сырнă вымпĕл пăрахса пачĕç. Хаĺ ĕнтĕ пирĕн пурсăмăран та куççем самолйотсем çинче: вĕсем Раскова парашӳтпа аннă вырăн патнелле вĕçсе каймала.

Кербирен пынă йултăшсем вырнаçса та ĕлкĕреймен-ха, пире каллех çĕнĕ хăнасем йышăнма тиврĕ: Амгуń йĕнчен çарти йултăшсен ушкăнĕ килет. Вĕсем кимĕсемпе пырса çитнĕ. Вăл ушкăна комиссар Литвиненко йулташ йертсе пынă.

Тахăшĕ шӳт туса каларĕ, пайан татăх хăнасем кĕтсе илмеле пулат пуль-ха, терĕ. Çавăн пекех пулчĕ те вăл.

Шăртланса тăракан сопкă хыçĕнчен пĕчĕк çын кĕлетки курăнса кайрĕ. Кам пулма пултарат-ха вăл? Тинкерсе пăхрăмăр.

— Маринă!.. Раскова!..

Маринă паттăр та шанчăкла утăмсемпе утса пырат...

— Апла тăк, йăлтах лайăх, Маринă?—ыйтатпăр унтан.

Уççăн та простă ответлерĕ пире Маринă Раскова:

— Пирĕн çĕршывра çын çухалса кайма пултарат-и вара!

Врач Тихăнăв йулташ тӳрех штурмăн сывлăхĕ çинчен ыйтса пĕлме пуçларĕ. Анчах Маринă малалах пырат, самолйот патне. Вăл хăйĕн штурман кабинĕ патне пычĕ, ăна чи вакă деталсем таранах пăхса тухрĕ, пур приборсене те тĕрĕслерĕ.

— Пурте чип-чиперех!

Пурте пĕлеççĕ, машинă çинче пĕр шăйăрални те пулман. „Родина“ самолйота тĕлĕнмеле чаплă антарса лартнă.

Маринăна самолйотăн лаптака вырăнĕ çине лартрăмăр, вара пурте ăмăртмалах уншăн кăмăллă ĕççем тума пуçларĕç. Кашнийех Маринăшăн мĕнле те пулин ырă тăвасшăн тăрăшат.

Каçхи апат тунă хыççăн, Литвиненко йулташ лагĕртен тухса кайасси çинчен кăтарту пачĕ.

Ир тĕлне йăлтах хатĕрленсе çитрĕмĕр. Грузсемпе тĕрлĕ хатĕрсене пĕр-пĕрин хушшинче уйăртăмăр. Амгуń патне çитме—10—12 километр. Çак çул тăрăх пирĕн 8 сехет хушшинче тухмала пулчĕ. Путакан шурлăх урлă, çăра вĕтлĕх катасем витĕр пытăмăр. Кашни 150-200 метр утнă хыççăнах чарăнса канатпăр. Маринăна носилкăсем çинче йатса пыратпăр. Каç пуласпа кăна пирĕн ушкăн йуханшыв хĕррине çитрĕ, унта пире кимĕсем кĕтсе тăнă. Вĕсенчен пĕрин çине Тихăнăв йулташ, Расковăна пăхса пыраканскер, ларса кайрĕ, теприн çине—комиссар Литвиненко йулташ. Çапла вĕсем Амгуńăн тепĕр йĕнчи çыранĕ çине каçрĕç. Ыттисем пурте айалала çуран антăмăр, унтан бот çине ларса леш йĕнчи çыран çине тухрăмăр. Унта вара епĕр çĕр каçрăмăр.

Ирхине кимĕсемпе бот çине ларса, епĕр Амгуń тăрăх Кербине кайма тухрăмăр.

Амур çинчи Комсомольск.
Октăберĕн 14-мĕш.

Суйлавçăсем хăйсен депутатне кайала чĕнсе илнĕ

БЕРЕЗНИКИ, октăберĕн 15-мĕш. Суйлавçăсен пухăвĕсем пысăк активлăхпа ирттереççĕ, вăл пухусенче хула совечĕн депутачĕсем хăйсен ĕçĕсем çинчен отчотсем туса параççĕ. Хула çумĕнчи Веретийа йатлă поçолăкра пухăва 150 суйлавçă пынă.

Пухура работницă Паршукова йулташ çапла каланă:

Пирĕн поçолăк пылчăк ăшне путнă. Хула совечĕ тата епĕр суйланă çынсем—депутатсем Чашинăпа Кириллăва йултăшсем суйлавçăсен наказĕсене—рабочисем пурăнакан хула хĕрринчи вырăнсене лайăхлатасси çинчен панă наказсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Сталин йулташ депутат халăх тарçи вăл, тесе кăтартса панине Чашинă маннă.

Йапăх ĕçленĕшĕн, суйлавçăсен наказĕсене пурнăçа кĕртменшĕн пуху Чашинă депутата хула совечĕн составĕнчен кайала чĕнсе илнĕ. (ТАСС).

Финударниксене премиленĕ

Тăвай районĕ каçалхи виççĕмĕш кварталти финанс планне срукчен тултарнă. Ку йĕнĕпе районра Вырăс-Нăрваш йалсовечĕ (председателĕ В. Максимăв) пуринчен лайăх ĕçленĕ. Тăвай райĕçтăвкомĕ ăна куççа çӳрекен хĕрлĕ йалав панă.

Виççĕмĕш кварталти финанс планне тултарас йĕнĕпе кăтартулă ĕçленĕшĕн, райĕçтăвком йалсовет председателĕсене, налог агенчĕсене тата колхоз председателĕсене—пурĕ 30 çынна 75 тенке çитиччен премисем панă.

Трактăрсене нефт газĕпе ĕçлеттереççĕ

Темиçе çул кайарах Белореченски районĕнчи „Пролетарий“ совхозра (Краснодар крайĕ) трактăрсене нефт газĕпе ĕçлеттерес майпа опыт туса пăхнă. Опыт нефт газĕпе трактăр ĕçлеме пултарнине кăтартса панă.

Районри машинă-трактăрлă станци 135 трактăра нефт газĕпе ĕçлеттересси çине куçарма хатĕрленнĕ. Трактăрсем çумĕнче йатарласа газ баллонĕсем пулаççĕ тата газ тултармали станцă тăваççĕ.

Вăл газа нефт кăларакан Апшерон районĕнчен илсе пыраççĕ, вăл район Белореченски колхозĕсенчен 50 километрта.

Белореченски МТС трактăрĕсене газпа ĕçлеттересси çине куçарни кăна 300 пин тенкĕ перекет парат. (ТАСС).

Канаш—Шупашкар чукунçулĕ çинче

ÇĔРПӲ. Анатри Кипекçе йалсоветĕнчи „Ĕмĕт“, „Çурла“ тата „Молот“ колхозсем çумĕнчи пуçламĕш комсомол организацисем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа вĕсем комсомолĕцсенчен бригадă туса Канаш—Шупашкар чукунçулĕ çинче октăберĕн 25-мĕшĕнчен ĕçлеме пулчĕç.

Комсомолĕцсен бригадисем 57-мĕш километрта ĕçлеççĕ. „Ĕмĕт“ колхозри комсомолĕцсен бригади 22 çынран тăрат (бригадирĕ Ф. Андрейĕв). Комсомолĕцсем ăмăртса ĕçлесе ĕç нормине ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Акă, Илйинпа Йевдокимăв комсомолĕцсем сменăра 8 кубла метр çĕр чавма обйазательствă илнĕ. Хăйсем илнĕ обйазательствăна вĕсем 150 процент таран тултараççĕ. А. Йефимăвă тата А. Çеменăвă комсомолкăсем те нормăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

В. Дмитрийĕв.

Хĕле лайăх хатĕрленмеле

КӲКЕÇ. Пайтерекри „Ильич“ колхозăн лаша тата ĕне витисем тул йĕнчен пăхсан куçа илĕртме те пултараççĕ: пысăк, çӳлĕ, çине тимĕр витнĕ. Анчах, çывăхарах пырсан, инçетрен чакăрăн курăнса ларакан витесен сăнĕ те йулмаст. Сан умна хăйĕн хуçалăхне тыткалама пĕлмен хуçан тирпейсĕр, таса мар килхушшийĕ тухса тăрат. Аçта пăхнă унта йăвăççем, çĕрĕк-маракçем сапаланса выртаççĕ. Витене кĕнĕ çĕртех пĕчченĕкех те мар тислĕк купийĕ. Шала кĕрсессĕн тĕлĕнмелипех тĕлĕнетĕн вара. Ĕне вити теме те, сарай теме те çук кăна. Витере 100 лавран кайа мар тислĕк выртат.

Вите лапамра ларнă пирки, çулсеренех вите умне çуркунне шыв пырса капланат. Çавна пĕлсе тăрсах, шыва урăх çĕртен йама канав авăтма шутламаççĕ.

Каçал 18 ĕне пăруламала. Пăрусене хупма вырăн çитмест. Витене хĕле кĕме хатĕрлемен.

Фермă валли утă-улăм, тĕш тырăсем уйăрса паман. Ирттнĕ çулсенче те колхоз правленийĕ çапла тунă, фермă фуражне хăй ирĕкĕпех тыткаланă, фермăна тивĕçлине уйăрса актăпа паман.

Йулашкинчен райçĕрĕç пайĕн зоотехникĕсем пирки те каламала. Вĕсем чылай чухне колхозсене пулăшас вырăнне, пырса тухса анчах кайаççĕ. Акă, „Ильич“ колхоз ферминче Васийĕвă зоотехник пулнă. Вăл фермă хĕллене хатĕр марри çинчен актă çырнă та, тухса кайнă.

Колхоз фермисене пулăшма актсем çырса çӳрени мар, вĕсене куллен пулăшни, зоотехправилăсене пурнăçа кĕртме вĕрентсе пыни кирлĕ.

Т. Логинăв.

Кăмакасене торфпа хутаççĕ

Икĕ уйăх кайала Чанкасси йалĕн (Ишлей р.) улăхĕнче çунакан торф вырăнĕ тупнă пулнă. Ăна типĕтсе çунтарса пăхсан, вăл вутăран та темиçе хут лайăххине пĕлнĕ.

Çакăн хыççăн Чаканарти чăпта çаптаракан ертел председателĕ Алексейĕв чăпта маçтерскойне 126 лав торф турттарса хучĕ, кунсăр пуçне тата вăл хăйне валли киле 30 лав турттарса кайрĕ. Колхозниксем те вăл торфа вутă вырăнне хутма 20—30 шар лав турттарса, хĕллене хатĕрлесе хучĕç. Халĕ вĕсем кăмакасене торфпа хутаççĕ.

М. Галкинă.

Çăматăсем

Шупашкарти „Кожупряжь“ ертелĕн çăматăсем тăвакан цехра çăматăсене халиччен алăсемпе йăвалаÇа тунă. Çавна пула ĕç тухăçлăхĕ те пĕчĕккĕ пулнă.

Хаĺ ку цеха йăлтах çĕнетсе тăваççĕ. Çывăх вăхăтра унта çăматăсем йăвалакан виçĕ машинă ĕçлеме тытăнаççĕ. Çăматăсене машинăпа туса кăларма пуçлани продукци хисепне нумай ӳстермеле. Хальхи вăхăтра кунне 20—25 мăшăр çăматă тăваççĕ пулсан, унчухне вара цех икĕ сменăра кунне 90 мăшăр таран çăматă туса кăларакан пулат.

Пулни-иртнисем

Октăберĕн 14-мĕшĕнче Шупашкарти „Бакалей“ магазинне йапаласем илме кĕнĕ М. Федотăвă кăсйинчен пĕр вăрă укçа кошелйокĕ кăларса илнĕ. Вăрăна çийĕнчех тытса милици управленине илсе кайнă.

Вăл—Е. Н. Мосевнин пулнă. Халиччен вăл темиçе çын кăсйине çаратнă, уншăн вăл айăпланнă та пулнă. Мосевнина арĕсленĕ.

Пĕлтерни

Октăберĕн 17-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре Йалхуçалăх институчĕн çуртĕнче ПСК(б) Партин Шупашкар хула комитечĕн черетлĕ пленумĕ пулат.

КУН ЙĔРКИ:

1. ПСК(б)П хула комитечĕн ĕç планне сӳтсе-йавасси—докладчик Лапин й.

Пленума партком çекретарĕсемпе парторгсем те пымала.

ПСК(б)П хула комитечĕ.

Пĕлтерни

Октăберĕн 19-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре Йалхуçалăх институчĕн çуртĕнче хулари партактивăн пухăвĕ пулат. Партактив валли пухăва кĕмелли пропуска çекретарсемпе парторгсем ПСК(б)П хула комитетĕнче илеççĕ.

КУН ЙĔРКИ:

1. ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференци итогĕсем—докладчик А. А Волкăв й.

ПСК(б)П хула комитечĕ.

Ответлă редактăр заместителĕ **В. ЙАКĂВЛĔВ.**

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран комбинатне

бухгалтĕрсем, счетоводсем тата картотетчиксем кирлĕ

„Росснабсбытăн“ Чăваш республикĕнчи уйрамне

ОПЫТЛĂ КАССИР васкавлă кирлĕ

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран комбиначĕ

ата-пушмак калăпĕсем тата химикатсенчен пушатнă **пичкесем сутат**

Шупашкарти кооптехникума

нимĕç чĕлхине вĕрентекен преподавателĕ кирлĕ

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

2—2

Халăха пĕлсе тăма

Шупашкар хулинче Спортивнăй урамра 3-мĕш номĕрлĕ çуртра (Карл Маркс урамĕн кĕтесĕ, Пожарнăй командăран пĕр квартăл çӳлерех)

хулари иккĕмĕш аптекă уçнă.

Вăл аптекă врачсем панă рецептсем тăрăх емелсем хатĕрлет тата тĕрлĕрен аптекă таварĕсем, чирлисене пăхмалли йапаласем, çыхса йамалли хатĕрсем тата санитарипе гигийенă таварĕсем сутат.

Çĕнĕ аптекăн кирлĕ таварсем çителĕклĕ тата унта квалификацилĕ фармацевтсем ĕçлеççĕ.

Чăваш аптекоуправлени хулан çӳлти пайĕнче пурăнакан мĕн пур граждăнсене 2-мĕш аптекăпа усă курма ыйтат.

Аптекă канмалли кунсемсĕр пуçне кашни кунах ирхине 9 сехетрен пуçласа каçхине 5 сехетчен ĕçлет.

Çĕнĕ аптекăпа усă курăр!

Чăвашаптекоуправлени.

2—1

Йалхуçалăх снабженин Чăваш республикĕнчи канторне йалан ĕçлеме

бухгалтĕр, счетовод-кассир, машинисткă тата уборщицă-рассылнăй КИРЛĔ.

Администраци.

Кĕрхи тырă калчисене пăхса усрасси

Каçал кĕрхи тырăсене акнă вăхăтра çăмăрсем пулманнипе чылай районсенче кĕрхи тырăсене акмали çĕре кирлĕ пек лайăх хатĕрлеймен. Хăшпĕр колхозсенче акана кайа йулса тухнипе типĕ çĕр çинех, çитменнине тата алăпах акса хăварнă. Çавăнпа та вырăнĕ-вырăнĕпе кĕрхи тырăсем вăйсăр шăтса тухрĕç. Çентăбĕр уйăхĕнче пулнă çăмăрсем кĕрхи тырă калчисене кăштах йусанма май пачĕç пулин те калчасем йур айне вăйлăн йулчăр, хĕллехи сивве чăтăмлăн пулччăр тесен, кĕрхи тырă калчисене кĕркуннехи вăхăтсенчех апат парса хăварни кирлĕ.

Т. Д. Лысенко академик кĕрхи тырă калчисене хĕллехи сивĕрен сыхласа хăвармали тĕп ĕç—вăл агротехникăлă ĕçсене анлăн туса пынинче, тесе вĕрентет. Агротехникăна çителĕклĕ таран пăхăнса ĕçлемен вырăнсенче темле сивĕ çанталăка тӳсекен суртлă тырă та сивĕпе пĕтме пултарат. Ку ыйтупа ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Тĕштырă Тĕп Управленийĕ аслăлăх институчĕсенче ĕçлекен работниксемпе пĕрле йатарласа канашлу туса ирттернĕ. Канашлу кĕркуннехи вăхăтсенче кĕрхи тырă калчисене пăхса тăрас йĕнĕпе кирлĕ нумай агротехникăлă ĕçсене туса ирттерме палăртса хăварнă.

Вăйсăр шăтса тухнă калчасене ӳсме вăй парас, калчасем хĕллехи сивве чăтăмлăрах пулччĕр тесен, вĕсене кĕркуннех апат парса хăварас пулат. Ку тĕлĕшпе пирĕн республикăри колхозсенче чылай паха опытсем пур.

Акă, Вăрнар районĕнчи Колцовкă колхознех илер. Ку колхозра кĕрхи тулă акнă вырăна кĕркуннех суперфосфат, кали таварĕ сапса хăварнă хыççăн (пĕр гектар çине 2 центнĕр суперфосфат, 1,5 центнĕр хали тăварĕ) кашни гектартан 22,1-шер центнĕр тулă туса илнĕ, апат парса хăварман вырăнсенчен 18,9-шер центнĕр çеç тухнă. Çав районрах, Апнер колхозĕнче ыраш калчи çине кĕркунне пĕр гектар пуçне 0,80 центнĕр аммони сулфачĕпе фосфăр тата калилĕ имçамсене хутăштарса сапнă çĕрте кашни гектартан 20,7 центнĕр ыраш туса илнĕ, апат паман вырăнсенче 11,6-шер центнĕр çеç тухнă.

Çак кĕркунне те кĕрхи тырă калчисене апат парса хăварасси пысăк вырăн йышăнса тăмала. Халех пур колхозсенче те кĕрхи тырă калчисене минерал çăнăхĕсемпе тата вырăнти имçамсемпе апат парассине организацилемеле. Халиччен тунă сăнавсем азотлă имçамсем калчана хăварттăн ӳсме пулăшни, фосфăрла тата калилĕ имçамсем калчана хĕллехи сивве чăтăмла пулма пулăшни çинчен калаççĕ.

Кĕрхи тырă калчисене апат панă чухне калчан вăй-халĕ мĕнлине хисепе илни кирлĕ. Вăйсăр ӳсекен калчасене минераллă имçамсемпе ытларах апат памала. Ун чухне çакăн пек имçамсемпе усă курмала: пĕр гектар çине апат пама аммиак çелитри (0,5—0,6 центнĕр), йе лейна çелитри (0,6—0,8 центнĕр), йе аммони сулфачĕ (0,8—1 центнĕр); суперфосфат—1,4—1,7 центнĕр тата 40 процентлă кали тăварĕ—0,6—0,8 центнĕр сапмала.

Вăйлă, тикĕс ӳсекен вырăнсенчи калчасем хĕллехи сивĕре çĕрсе ан пĕччĕр тесен, фосфăрпа кали имçамĕсемпе çеç апат парас пулат.

Минераллă имçамсене вăхăтра хатĕрлемен колхозсен вырăнти имçамсемпе те пулин çак кĕркунне усă курма тăрăшмала.

Калчана вырăнти имçамсемпе апат памали виçе çапла пулма пултарат: пĕр гектар çине кĕл—3—3,5 центнĕр, тислĕк шывĕ—(2—3 пайне шывпа хутăштарни)—4—5 тоннă, чăх-чĕп тислĕкĕ—3 центнĕр, çĕрĕк тăприпе фекали компостĕ—8—10 тоннă таран сапмала.

Тăпран çийелти сийĕ çăмăрпа хытса ларни вăйсăр ӳсекен калчашăн пит хăрушă. Тăпран çийелти сийĕ кăшт та пулин пусăрăнса хытни те калчасене шăтса ӳсме чăрмантарат. Çавăнпа та тăпра çийĕ çине калча кăшт çеç шăтса тухнă вăхăтра тăпран çийелти сийĕ çăмăрпа хытса ларнă пулсан, ăна çийĕнчех рет урлă сӳрелесе пăрахмала.

Вăйсăр ӳсекен кĕрхи тырă калчисем, уйрăмăнах кĕрхи тулă калчисем çумкурăксенчен нумай аптрама пултараççĕ. Кун пек чухне кĕрхи тырă калчисем çинчи çумкурăксене кĕркуннех çумласа хăварас пулат.

Вăрмансăр, хӳтлĕхсĕр вырăнсенче йур хулăм пулмаст. Кун пек вырăнсенче кĕрхи тырă калчисене сивĕпе пĕтесрен хăтарса хăварас çĕрте калчана мулчировани тата йур тытса купалани пысăк вырăн йышăнса тăрат.

Мулчированийĕ çанталăк сивĕтсен, шăн çĕр çинче туни усăлăрах шутланат.

Çурçĕр йĕнчи районсенче, торф пур çĕрте, вак тата типĕ торфпа, кăнтăр йĕнчи районсенче—тураса вĕтетнĕ улăмпа йе çĕрсе çитнĕ вĕтĕ тислĕкпе мулчировани туни усăлă пулат. Пĕр гектар çĕре мулчировани тума торф 15—20 тоннăран кайа мар, çĕрсе çитнĕ тислĕк—10—12 тоннă таран кирлĕ.

Кирăври селекцилĕ сăнав станцийĕ кăтартса панă тăрăх, кĕрхи тулăна кĕркуннех улăмпа мулчировани туса хăварсан гектартан 1,7—1,8 центнĕр таран ытларах тырă тухни палăрнă.

Артемăври зоналнăй сăнав станцийĕ тунă опытсем тăрăх, шăнман çĕр çинче мулчировани туса хăварсан тулă тухăçĕ гектартан 0,3 центнĕр çеç ӳснине кăтартнă, шăн çĕр çинче мулчировани тунă çĕрте гектартан 1,2 центнĕр ытларах тулă тухнă.

Кĕр лайăх килмен çулсенче йур тытса купалани те пысăк вырăн йышăнса тăрат. Хĕллехи кунсенче йур тытса купаланă вырăнсенчен тырпул та ытларах тухат. Çавăнпа та колхозсен хĕллехи вăхăтра йур тытса йулма халех хатĕрленсе, ăна ытларах тытма тăрăшмала.

„ЧĂВАШ КОММУНĔ“ СЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ ПĔР УЙĂХА 2 Т. 50 ПУС. 3 УЙĂХА 7 Т. 50 П., 6 УЙĂХА 15 Т. ÇУЛТАЛĂКА 30 ТЕНКĔ. ПОДПИСКĂНА СЫХАНУ УЙРĂМĔСЕМ, ПИСМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 530. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793. ф. 6. 58 × 84 п. л.